Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького
№

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Октябрь
14
юнкун
№ 201 (9110)
Хакĕ 20 пус.
36-мĕш çул тухать.

Паянхи номерте:

ОКТЯБРЬ УЯВĔ УМĔНХИ ĂМĂРТУ (1 стр.).
Республика уй-хирĕсенче (1 стр.).
Кашни çемьене—хаçат-журнал! (1 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ: Л. Мочалов.—Рабочисем хăйсен идейăлла-теорилле пĕлĕвне ӳстереççĕ (2 стр.).
Г. Мартиросян.—Коммунизмшăн хăюллă кĕрешнĕ паттăр. С. Г. Шаумян çуралнăранпа 75 çул çитнĕ тĕле (2 стр.).
ЧĂВАШ АССР МИНИСТРĔСЕН СОВЕТĔНЧЕ. Финанс органĕсем 1953 çулхи виççĕмĕш кварталти финанс планне тултарассишĕн социализмла ăмăртса ĕçленин итогĕсем (2 стр.).
Совет Правительстви Ирĕклĕ Триест Территорийĕ çинчен тăракан ыйту пирки США тата Англи Правительствисене панă нота (2 стр.).
СОВЕТ СПОРЧĔН ÇЫННИСЕМ. В. Сташков.—Çĕршыв чемпионĕ (3 стр.).
А. Малышев.—Çĕрулмипе пахча çимĕç хатĕрлессине хăвăртлатар (3 стр.).
Н. Сергеев.—Медицина учрежденийĕсене хĕле лайăх хатĕрлесе çитерер. (3 стр.).
А. Горшков. — Стена хаçачĕ студентсен пĕлĕвне ӳстерес ĕçре (3 стр.).
Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕ (4 стр.).

Комсомол организацийĕсен отчетпа суйлав пухăвĕсене лайăх ирттермелле

Октябрĕн 15-мĕшĕнче комсомолăн пуçламăш организацийĕсен отчетпа суйлав пухăвĕсене ирттерме тытăнаççĕ. Республикăри комсомол организацийĕ отчетпа суйлав пухăвĕсене Коммунистсен партийĕ тавра тачă пĕтĕçсе, организаци тата политика енĕпе ниçсанхинчен ытларах çирĕп пулнипе ирттерет.

Комсомолăн республикăри XX-мĕш конференцийĕ пулнăранпа ВЛКСМ организацийĕсем хăйсен ретне чи лайăх çамрăксемпе хĕрачасене 12 пин çын ытла илчĕç. Колхозсенчи, машина-трактор станцийĕсенчи, промышленность предприятийĕсенчи комсомол организацийĕсем хуçалăхла-политикăлла ĕçсене пурнăçлама активлăрах хутшăнма пуçларĕç.

КПСС Центральнăй Комитечĕн кăçалхи сентябрь уйăхĕнчи Пленумĕ «ССР Союзĕн ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен» йышăннă постановлени, ун хыççăн партипе правительство ялхуçалăхне вăйлатас тĕлĕшпе йышăннă постановленисем комсомол умне çĕнĕ пысăк задачăсем лартрĕç, комсомола хăйĕн пĕтĕм ĕçне çӳлĕ пусăма хăпартма, хăйĕн ĕçне лайăхлатма хушрĕç. Отчетпа суйлав кампанине ирттерни асăннă постановленисене пурнăçлама комсомолецсемпе мĕнпур çамрăксене мобилизацилеме нумай пулăшмалла.

Отчетпа суйлав пухăвĕсем—комсомол организацийĕсен пурнăçĕнчи пысăк ĕç. Çак пухусенче комсомол организацийĕсем Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе пурнăçланă ĕçсен, çамрăксене воспитани парас тĕлĕшпе тунă ĕçсен итогне палăртаççĕ. Пухусенче комсомолецсем ĕçри çитменлĕхсене, çав çитменлĕхсене пĕтермелли, комсомол организацийĕсен ĕçне малалла лайăхлатмалли майсене палăртаççĕ.

Пухусем йĕркеллĕ тата идея тĕлĕшĕнчен çӳлĕ шайра иртесси ку ĕçе партипе комсомол органĕсем лайăх ертсе пынинчен килет. ВЛКСМ райкомĕсемпе хула комитечĕсен отчетпа суйлав пухăвĕсене ирттерес енĕпе мĕнле ĕçсем тумаллине тĕплĕн палăртас пулать. Комсомолăн кашни организацине яма ответлă представительсем уйăрмалла. ВЛКСМ райкомĕсемпе хула комитечĕсен бюровĕсенче комсомолăн районти е хулари конференцийĕнче пулма миçе членпа миçе делегат суйламалли çинчен решени йышăнмалла.

Иртнĕ вăхăтра отчетпа суйлав кампанине ирттернĕ чухне комсомол демократине, конференцие миçе членпа миçе делегат суйласа ямалли нормăсене, вăрттăн сасăласа суйламалли кандидатсен списокĕсене кĕртме кандидатурăсем тăратасси çинчен, кандидатсем пирки сӳтсе явасси, вăрттăн сасăласси, счетнăй комиссисен ĕçĕсем çинчен комсомолăн ертсе пыракан органĕсене суйламалли инструкципе кампанисене пăснă фактсем пулнă. Хăшпĕр районсемпе хуласенчи организацисенче комсомол пухăвĕсене графикра палăртнă вăхăтра ирттермен. Пухусем идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çителĕксĕр иртнĕ. Унта ĕçри çитменлĕхсене сахал критикленĕ. Çак çитменлĕхсем ВЛКСМ райкомĕсемпе хула комитечĕсем отчетпа суйлав кампанине ирттерме япăх хатĕрленнĕ тата начар ертсе пынă пирки пулнă. Ун пек çитменлĕхсем текех ан пулччăр тесе асăрханас пулать.

Отчетпа суйлав кампанине идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çӳлĕ шайра, комсомолецсен активлăхĕ пысăк пулнипе, комсомол демократине çирĕппĕн пурнăçласа пынипе ирттересси—комсомолăн ертсе пыракан органĕсен чи пысăк задачи.

Пухусенче çитменлĕхсене çивĕччĕн критиклени, принциплă критикăпа самокритика анлă сарăлтăр. Кашни комсомолец пухура тухса калама, комсомол организацийĕн, ВЛКСМ комитечĕн, предприятин, колхозăн, машина-трактор станцийĕн, комсомолăн аслă органĕсен ĕçĕсем пирки хăйĕн шухăшне калаçа патăр.

Кăçал колхозсенчи комсомол организацийĕсен структуринче улшăнусем пулаççĕ. Колхозсене пĕрлештересе пысăклатнă май республикăри колхозсенче ВЛКСМ членĕсем 50 çынтан пуçласа 100 çын таран шутланакан комсомол организацийĕсем 60 ытла. ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн постановленийĕ тăрăх, ВЛКСМ членĕсем 50 çынтан пуçласа 100 çын таран шутланакан колхозсенче уй-хир бригадисенче комсомол организацийĕсем тума ирĕк панă. Вĕсем комсомолăн пуçламăш организацийĕсен прависемпе усă курмалла. Отчетпа суйлав пухăвĕсене ирттернĕ чухне асăннă постановление пурнăçлас пулать. Колхозри комсомол организацийĕнче 50 член ытла пулсан, комсомолăн бригадăсенчи пуçламăш организацийĕсене тумалла.

Комсомол организацийĕсен отчетпа суйлав пухăвĕсене ирттерме хатĕрленнĕ вăхăтра тата ирттернĕ май çамрăксене воспитани парас ĕçе вăйлатса пымалла, комсомол организацийĕсене малалла тĕреклетсе, организаципе политика тĕлĕшĕнчен çирĕплетсе, çамрăксене ĕçри çĕнĕ çитĕнӳсемшĕн кĕрешме хавхалантарса пымалла.

ВЛКСМ райкомĕсемпе хула комитечĕсен ĕçĕнче халĕ комсомол организацийĕсен секретарĕсен кадрĕсене тупса çитерессине тĕп вырăнта тăмалла. Парти вĕрентнĕ тăрăх, пирĕн ертсе пырас ĕçе политика тĕлĕшĕнчен хатĕрленнĕ, ĕçре палăрнă çынсене уйăрса лартмалла; кадрсене час-часах улăштарни пулмалла мар, вĕсене ĕçлеме ытларах вĕрентмелле, воспитани памалла.

Иртнĕ отчетпа суйлав кампанийĕн итогĕсенчен çакă курăнать: комсомол кадрĕсене суйласа илес, ĕçе вырнаçтарса тухас тата воспитани парас енĕпе комсомол органĕсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пулаççĕ. Комсомолăн Красноармейски, Октябрьски, Элĕк райкомĕсем комсомол организацийĕсен секретарĕсене çав ĕçре нумай вăхăт хушши ĕçлеттерме тăрăшмаççĕ, секретарьсене ĕçлеме вĕрентсе пырас вырăнне, вĕсене час-часах улăштараççĕ. Çапла, иртнĕ çулхи суйлав вăхăтĕнче республикăра комсомолăн пуçламăш организацийĕсен 1.469 секретарьне улăштарнă. Комсомолăн пуçламăш организацийĕсен секретарĕсем пулса ĕçлеме политика тĕлĕшĕнчен хатĕрленмен, практикăлла ĕçе туса пыма пултарайман çынсене суйлани те пулнă. Комсомол организацийĕсен секретарĕсем хушшинче халĕ те хĕрачасем сахал-ха.

Çамрăксем хушшинче авторитетлă тата вĕсем юратакан çын, çамрăксен хастарлăхĕпе пуçарулăхне ӳстерсе пыма, вĕсене коммунизм тăвассишĕн тăрăшса ĕçлеме çĕклекен çын кăна комсомол организацийĕн руководителĕ пулма тивĕçлĕ. Комсомол организацийĕн секретарĕ идея тĕлĕшĕнчен çӳлĕ шайра тăмалла, ĕçре çирĕп пулмалла, парти ĕçне чунтан-чĕререн парăнса ĕçлемелле, çамрăксене коммунизмла воспитани парас тĕлĕшпе шанса панă ĕçшĕн ответлă пулмалла.

Комсомол кадрĕсене тĕрĕс суйласа илесси тата вĕсене çак ĕçре нумай вăхăт хушши ĕçлеме çирĕплетесси—ВЛКСМ райкомĕсемпе хула комитечĕсен пысăк задачи. Комсомолăн пуçламăш организацийĕсен руководителĕсем хăйсен пысăк тата ответлă задачисене ВЛКСМ райкомĕсемпе хула комитечĕсем куллен-кун пулăшса пынипе çеç ăнăçлăн пурнăçласа пыма пултарĕç.

Отчетпа суйлав пухăвĕсем комсомол организацийĕсене ертсе пыма çĕнĕ çамрăк кадрсене те суйлĕç. Вĕсене ВЛКСМ райкомĕсемпе хула комитечĕсен малтанхи кунранах пулăшса пыма тытăнас пулать, вĕсемпе семинарсем ирттермелле, ĕçлеме вĕрентсе пымалла.

Комсомолăн отчетпа суйлав пухăвĕсене ирттерессине парти организацийĕсен тăтăшах ертсе пымалла. Вĕсен çак кампание ирттерес ĕçри çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерсе пыма, комсомол органĕсене кадрсем суйласа илессине тĕрĕс тытса пыма пулăшмалла.

Республикăри комсомол организацийĕ, отчетпа суйлав пухăвĕсене лайăх ирттерсе, ĕçе малалла лайăхлатса пырĕ, парти организацийĕсене умра тăракан задачăсене пурнăçлама пулăшĕ.

*

Çĕршыври предприятисенче

«Гюргяннефть» трестĕн виççĕмĕш промыселĕн коллективĕ Азербайджанра 11 уйăх планне пуринчен малтан срокчен тултарнă. Ноябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне нефтяниксем çулталăк программине тултарма йышăннă.

Харьковри «Красный Октябрь» завод кăçал çĕнĕрен 11 йышши машина туса кăларма тытăннă. Уйрăмах керамически трубăсем хатĕрлекен «СМ-88» йышши вакуум-пресс питĕ интереслĕ. Вăл пĕр сехет хушшинче 100 ытла труба туса кăларать.

Одессăри армансемпе элеваторсем валли оборудовани туса кăларакан завод вагонсем пушатакан механизм туса кăларма тытăннă. Çак механизм пĕр вагона 30 минут хушшинче пушатма пултарать.

Октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС).

Поляр леш енче пахча çимĕç çитĕнтереççĕ

СЫКТЫВКАР. Поляр леш енчи Воркутăра теплица хуçалăхĕ вăйланса пырать. Виçĕ çул каялла хулари парниксенче 34 тонна пахча çимĕç туса илнĕ. Кăçал сутуилӳ организацийĕсем теплицăсемпе парниксенчен 142 тонна пахча çимĕç илнĕ. Кăçал шахтерсене хăярпа помидор 47 тонна сутнă. Воркутăра çулталăк тăршшĕпех сухан сутаççĕ. Кăçалхи çура 30 тонна редис, салат, укроп туса илсе сутнă. (ТАСС).

Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăрту

Стахановла вахтăра

ÇĔМĔРЛЕ. Йывăç япаласем тăвакан завод коллективĕ Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнма чĕннине хулари пур предприятисенче те хапăл туса йышăнчĕç. Сĕтел-пукан комбиначĕн коллективĕ, уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, октябрь уйăхĕнчи плана срокчен тултарма пулчĕ. Комбинатăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тăваттăмĕш уйăх хăйĕн аллинче тытса тăракан виççĕмĕш цех коллективĕ уяв ячĕпе стахановла вахтăна тăчĕ. СССР Вăрманпа хут промышленность министерстви «Лайăх пахалăхлă продукци туса кăларакан бригада» ятне панă бригада—Б. Волков юлташ бригади—кашни сменăра нормăна 200 процент тултарать. В. Мытиков юлташ ертсе пыракан бригада нормăна 250 процент тултарса пырать.

Тăваттăмĕш цех коллективĕ те уяв ячĕпе стахановла вахтăна тăчĕ. Я. Кузьминпа В. Маленков фрезеровщиксем нормăна 250—300-шер процент тултараççĕ.

Улттăмĕш цехри И. Юрченков станочникпа Б. Одров столяр нормăна 300—360-шар процент тултараççĕ. Уяв умĕнхи ăмăрту анлăн сарăлса пырать.

П. АНТОНОВ.

Вăрман касакансен хастарлăхĕ

ВĂРНАР. Районти предприятисенче уяв умĕнхи ăмăрту вăйланса пырать. Ăмăртура вăрманпромхоз коллективĕ лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Вăрманпромхоз виççĕмĕш кварталта йывăç касса хатĕрлемелли тата турттарса кăлармалли плана чылай ирттерсе тултарчĕ.

Вăрман хатĕрлекенсем уява вунă уйăхри плана 110 процентран кая мар тултарнипе кĕтсе илме обязательство илнĕ. Панă сăмаха пурнăçлассишĕн рабочисем хушшинче социализмла ăмăрту анлăн сарăлса пырать.

Пĕнер вăрман пунктĕнче мотовозпа йывăç турттаракансем, П. Павловпа А. Иванчев юлташсем нормăна 125—135 процент тултараççĕ. Н. Арсентьев, М. Арсентьев тата Н. Солохин лавçăсем тата тухăçлăрах ĕçлеççĕ. Çăрăклă автоçулĕ çинче ĕçлекен шоферсем П. Осипов, В. Викторов тата Г. Миронов юлташсем кирек мĕнле çанталăкра та нормăна ирттерсе тултараççĕ.

Вăрманпромхоз кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра ĕçлеме 250 çынпа договор тунă. Вĕсене кĕтсе илме лайăх хатĕрленнĕ. Общежитисем хĕле хатĕр. Кашни вăрман пунктĕнче столовăйсем ĕçлеççĕ. Унсăр пуçне, вăрман каснă вырăнсенче апат пĕçермелли пунктсем уçнă.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Çулталăкри плана тултарнă

КАНАШ, октябрĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Хулари промкомбинат коллективĕ 1953 çулхи производство планне октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарчĕ, продукцин хăйне ларакан хакне 7,2 процент вырăнне 9,6 процент йӳнетрĕ. Тăхăр уйăхра планран ирттерсе 188 пин тенкĕ тупăш тунă.

Октябрь уявĕ ячĕпе ăмăртăва хутшăнса, коллектив тăваттăмĕш кварталти плана ноябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне тултарма, алюмини савăт-сапа туса кăларассине виçĕ хут ӳстерме, продукци пахалăхне лайăхлатма сăмах пачĕ. Коллектив панă сăмаха чыслă пурнăçласа пырать. В. Прокопьев юлташ ертсе пыракан бригада задание куллен 300 процент таран тултарать. Е. Мухтулов юлташ ертсе пыракан бригада та задание 250 процент таран тултарать. Комбинатра ĕç нормине тултарман рабочи çук.

Комбинат колхозсем валли кормозапарниксем туса кăларать, чугунран ялхуçалăх машинисен деталĕсем шăратса хатĕрлет.

М. ОРЛОВ,
хулари промкомбинат директорĕ.

Продукци лайăхланать

УЛАТĂР. (Телефонпа). Атă-пушмак фабрикинче ĕçлекенсем Октябрьти Социализмла Аслă революци 36 çул тултарнине чыслăн кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Çак кунсенче рабочисен пĕрлехи пухăвĕ пулчĕ. Унта аслă уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăнасси çинчен сӳтсе яврăмăр. Фабрика коллективĕ пĕрремĕш сортлă продукци ытларах туса кăларма, тăваттăмĕш кварталта планран ирттерсе 5 пин мăшăр атă-пушмак тума обязательствăсем илчĕ.

Октябрь уйăхĕн малтанхи 10 кунĕ хушшинче планран ирттерсе 500 мăшăр атă-пушмак туса кăларнă. План тăрăх пĕрремĕш сортлă продукци 80 процент пулмалла. Халĕ фабрика туса кăларакан продукци шутĕнче пĕрремĕш сортлă продукци 86 процент шутланать.

А. ДЕМБИЦКИЙ,
фабрика директорĕ.

Республика уй-хирĕсенче

Механизаторсем хаваслă ĕçре

ЕЛЧĔК. МТС механизаторĕсем ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлессишĕн социализмла ăмăртса ĕçлеççĕ. Ăмăртура коммунист Н. Титов юлташ ертсе пыракан 19-мĕш трактор бригади малта пырать. Бригада кĕрхи çĕртме сухи тумалли задание ирттерсе пурнăçларĕ. Уйрăмах В. Ивановпа В. Яковлев трактористсем хастарлă ĕçлерĕç. Вĕсем çĕртме тунă çĕрте сменăри нормăсене ирттерсе пурнăçласа пычĕç.

Л. Тихонов коммунист ертсе пыракан 15-мĕш трактор бригадинчи механизаторсем те «Марс» тата М. Горький ячĕпе тăракан колхозсенче çĕртме сухи туса пĕтерчĕç.

9-мĕш трактор бригадинчи П. Соловьевпа С. Болтаев трактористсем Пушкин ячĕпе тăракан колхозра 600 гектар çĕртме турĕç.

МТС октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне кĕрхи çĕртме сухи тумалли плана 91 процент, хура çĕртме тумалли плана 48 процент пурнăçланă.

Авăн çапас ĕçре Н. Краснов машинист мала тухрĕ. Вăл МК-1100 молотилкăпа «Пахарь» тата «Вперед» колхозсенче 900 тонна тырă çапнă.

А. МИХАЙЛОВ.

Силос хывмалли плана тултарма тăрăшатпăр

ЧУРАЧĂК, октябрĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Машина-трактор станцийĕ октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне районти колхозсенче тракторсемпе ĕçлемелли çулталăкри плана 100,1 процент тултарчĕ. Кĕрхи çĕртме тумалли плана 101,2 процент, авăн çапмалли плана 132,3 процент пурнăçланă.

Ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра туса пырас тĕлĕшпе К. Лаврентьев, Н. Афанасьев, М. Анисимов, Н. Никитин, Н. Терентьев, Ф. Осипов юлташсем ертсе пыракан трактор бригадисем уйрăммăнах пахa тĕслĕхсем кăтартса пачĕç.

Хальхи вăхăтра МТС коллективĕ районти колхозсенче силос хывмалли плана тултарассишĕн кĕрешет тата хура çĕртме сухи тумалли плана çак кунсенчех тултарма тăрăшать.

А. КОНДРАТЬЕВ,
МТС директорĕ.

Çĕртме тăвасси юлса пырать

ИШЛЕЙ. Кĕрхи çĕртме пысăк усă панине районти чылай колхозсенче лайăх пĕлеççĕ, çавăнпа ку ĕçе ăнăçлă туса ирттереççĕ. Киров ячĕпе тăракан колхоз октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне—250 гектар, Чапаев ячĕпе тăракан колхоз 330 гектар, «Активист» колхоз 150 гектар кĕрхи çĕртме турĕç. Çак колхозсем кĕрхи çĕртме тумалли плана çитес кунсенче пĕтĕмпех тултараççĕ.

Анчах та кĕрхи çĕртме тăвасси районти нумай колхозсенче питех те çителĕксĕр пулса пырать. План тăрăх районти колхозсен кĕрхи çĕртме сухи 9.100 гектар çинче туса хăвармалла пулсан, октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне пурĕ те 6.688 гектар кăна тунă. Хăшпĕр колхозсен руководителĕсем çак ĕç çине сӳрĕккĕн пăхаççĕ. Андреев ячĕпе, Владимир Ильич ячĕпе тăракан, «Сталинская гвардия», «Заря коммунизма», «Победа», «Красный плуг» колхозсем плана 50—60 процент кăна тултарнă.

«Заря коммунизма» колхозра кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе питĕ япăх организациленĕ, правлени председателĕ Т. Иванов юлташ кĕрхи çĕртме сухине вăхăтра, лайăх туса хăварассишĕн тăрăшмасть, тракторпа кăна сухаласшăн кĕтет. Лашасемпе паянхи куна пĕр гектар та сухаламан. Колхозра ĕç вăйĕ те, туртăм вăйĕ те нумай. Лашасем улăхра çӳреççĕ. Артель правленийĕ ĕçе организацилеме, ĕç дисциплинине çирĕплетме тăрăшмасть. Колхозри парторганизаци колхозниксемпе трактористсем хушшинче массăлла-политикăлла ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен.

И. МИХАЙЛОВ.

САДСЕНЕ ПЫСĂКЛАТАÇÇĔ

КӲБЕÇ. Кăçал районти колхозсем улмаçырла сачĕсем çĕнĕрен 65 гектар лартма палăртнă. 40 гектар çине улмуççисем, 25 гектар çине тĕрлĕ йышши çырла йывăççисем лартса хăвармалла.

Ильич ячĕпе тăракан колхоз членĕсем хăйсен 20 гектар йышăнакан обществăлла садне тата 10 гектар чухлĕ пысăклатрĕç. Унта 2 пин те 500 улмуççи. 4 пин тĕп хăмла çырли, 100 тĕп чие çырли тата ытти çимĕç йывăççисем лартса хăварчĕç. Сад эрнине çавăн пекех Сталин ячĕпе, Мичурин ячĕпе, Киров ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем те çимĕç йывăççисем нумай лартса хăварнипе палăрса турĕç.

Куйбышев ячĕпе тăракан колхоз кăçал панулми, çырла нумай пухса илчĕ, Шупашкарта 40 пин тенкĕлĕх çимĕçсем сутрĕ.

Ф. МАРКОВ,
А. ТИМОФЕЕВ.

Кашни çемьене—хаçат-журнал!

Совет пичечĕ—пирĕн партин чи вăйлă хĕçпăшалĕ. Вăл пулăшнипе парти ĕçсыннисене коммунизмла воспитани парать тата вĕсене çĕршыв умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлама мобилизацилесе пырать. Анлă массăсем хушшинче марксизм-ленинизмăн пурне те çĕнтерекен идейисене сарса, хаçатсемпе журналсем идеологилле ĕçе çĕнĕ задачăсен çӳлĕшне çĕклемелли вăйлă хĕçпăшал пулса тăраççĕ. Парти комитечĕсен хаçатсемпе журналсемсĕр пуçне, хуçалăх тата культура строительствине ертсе пыма пулăшакан урăх вăйлă хатĕр çук та.

Партипе правительство хаçатсемпе журналсен пахалăхне куллен-кун лайăхлатса пыма, вĕсен идейăлла шайне çĕклеме, çавăн пекех тата совет çыннисене хаçат-журналсем çителĕклĕ таран парса тăма тăрăшаççĕ.

Хаçат-журнал сарас ĕç политикăлла пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç. Хаçатсемпе журналсене массăсем хушшине ытларах сарас тесен, парти организацийĕсен ку ĕçе хăйсен аллине илес пулать. Коммунистсен партийĕ хаçат-журнал сарас ĕçе пысăка хурса хаклать. В. И. Ленин 1921 çултах çапла çырнă: «Çын вулама тата çырма пĕлнипе ĕçре усă курас пулать, ăна вулама кирлине парса тăрас пулать, унăн хаçатсем тата пропагандистла брошюрăсем пулччăр, хаçатсемпе пропагандистла брошюрăсене тĕрĕс вырнаçтармалла тата вĕсем халăх патне çитмелле тумалла».

Октябрĕн 15-мĕшĕнче пирĕн республикăра пур çĕрте те 1954 çулшăн хаçат-журнал çырăнтарас ĕç пуçланать. Мĕнпур парторганизацисем тата вырăнсенчи сыхăну органĕсем умĕнче ответлă задача—хаçат-журнал сарас ĕçе политикăлла тата организацилле çӳлĕ пусăмра ирттерес, кăçалхи декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне мĕнпур центрти тата вырăнти хаçат-журналсене 1954 çулшăн планпа пăхнă чухлĕ çырăнтарса çитерес задача тăрать. Парти райкомĕсемпе хула комитечĕсен, пуринчен малтан пропагандăпа агитаци пайĕсен хаçат-журнал сарас ĕçе куллен-кун ертсе пырас пулать, çак политикăлла кампание ирттерме мĕнпур пуçламăш парторганизацисене хутшăнтармалла, ку ĕçе кашни рабочи, колхозник тата служащи çемйи хаçат-журнал çырăнса илмелле тăрас тĕллевпе туса пырас пулать.

Партин районсенчи тата хуласенчи комитечĕсен ĕçсыннисене хаçат-журнал çырăнтарас ĕç мĕнле пыни çинчен бюросен ларăвĕсенче тăтăшах сӳтсе явмалла, хаçат-журнал сарас ĕçе пĕтĕмĕшле кăна мар, конкретлăн ертсе пымалла: кашни хаçатпа журнал тиражне вырнаçтарас ĕç мĕнле пынине тĕрĕслесе тăмалла, ку тĕлĕшпе сыхăну кантурĕсем, «Союзпичет» уйрăмĕсемпе вĕсен работникĕсем мĕнле ĕçленине тĕрĕслемелле, вĕсене кадрсене тĕрĕс уйăрса лартма, хаçат-журнал сарас ĕçе кирлĕ пек йĕркелеме тата хаçат-журналсене вулакансем патне вăхăтра çитерсе тăма пулăшмалла.

Хаçат-журнал сарас ĕçе лайăх организацилес шутпа парти комитечĕсен сыхăну кантурĕсемпе «Союзпичет» уйрăмĕсене хаçат-журнал подпискине йышăнма пулăшма коммунистсемпе комсомолецсем хушшинчен обществăлла уполномоченнăйсем уйăрса памалла, вĕсен ĕçне хаçат-журнал сарма сыхăну кантурĕсем уçнă пунктсенче пĕтĕçтермелле.

Республикăри парти организацийĕсем хаçат-журнал сарас енĕпе чылай опыт пухрĕç. 1953 çулшăн хаçат-журнал сарас тĕлĕшпе уйрăмах Çĕмĕрле райкомĕ, Улатăр тата Шупашкар хула комитечĕсем пысăк ĕçсем туса ирттерчĕç. Кунта хаçат-журнал çырăнтарас ĕç пуçлансанах «Союзпичет» уйрăмĕсене тата райорганизаторĕсене пулăшма хаçат-журнал подпискине йышăнакан обществăлла уполномоченнăйсем чылай уйăрнă, подпискăна бюджет укçи шучĕпе йышăнассине чакарса, çав вăхăтрах хаçат-журналсене хăйсен укçипе илсе тăма çыранакансен хисепне ӳстерессипе тата хаçат-журнал подпискине нумай срокласа йышăнасси çине тимлĕн çавăрса пăхнă.

Анчах, кунпа пĕрлех, кăçалхи çулшăн хаçат-журнал сарас тĕлĕшпе хăшпĕр районсенче пысăк çитменлĕхсем пулчĕç. Ĕçсыннисем хаçат-журнал нумай ыйтаççĕ тесе, партин Канаш хула комитечĕ, сăмахран, хаçат-журнал сарас ĕç мĕнле пынине тĕрĕслесе тăман, çапла вара хулара республикăри хăшпĕр хаçат-журналсем планпа палăртнă чухлĕ сарăлман. Буславкка, Ишлей районĕсенче хаçат-журнал сарас ĕçе йăлтах «Союзпичет» работникĕсем çине тиенĕ.

Республикăра уйрăмах «Çамрăк коммунист» хаçата, «Ялав» журнала, «Тăван Атăл» альманаха тата хăшпĕр районсенче тухакан хаçатсене сарас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур. Апла пулин те ВЛКСМ обкомĕ, Чăваш совет писателĕсен союзĕн правленийĕ тата парти райкомĕсем кунпа килĕшсе пурăнаççĕ, çак хаçат-журналсене сарас ĕçе кирлĕ пек вăйлатмаççĕ. Кунпа пĕрлех пирĕн уйрăм хаçатсемпе журналсен редакцийĕсем вулакансен прависене пăсни те тĕл пулкаланă. Тăвай районĕнчи «Сталин ялавĕ» хаçат, сăмахран, нумай вăхăт хушши кая юлса тухса тăнă, ăна вулакансем вăхăтра илсе тăрайман.

Çакă вăл, пĕтĕмĕшпе илсен, акă мĕн çинчен калать: пирĕн хăшпĕр парти райкомĕсемпе хула комитечĕсем идеологилле ĕçĕн çак пысăк участокне кирлĕ пек ертсе пымаççĕ-ха. Çакна асра тытмалла: ĕçсыннисем хушшинче хаçат-журнал сарас ĕç вăл—парти организацийĕсем тумалли ĕç тата вĕсен пирвайхи тивĕçĕ пулса тăрать. Хаçат-журнал сарас ĕçе хакламанни ĕçсыннисене воспитани парас ĕçре хаçат-журналсемпе начар усă курасси патне илсе пырать. Çавăнпа та çитес çулшăн хаçат-журнал сарас ĕçре халиччен пулнă çитменлĕхсене урăх тумалла мар.

1954 çулшăн хаçат-журнал сарнă чухне кашни хаçат, кашни журнал тиражне планра кăтартнă чухлĕ тултарасси çине уйрăмах тимлĕн пăхмалла. Кирек хăш хаçат-журнала та ирттерсе çырăнтарни пачах пулмалла мар. Планран ирттерсе вырнаçтарнă заказсене пурпĕрех йышăнмаççĕ.

Çитес çулшăн хаçат-журнал çырăнтарнă чухне уйрăмах ялти ĕçсыннисене ялхуçалăх изданийĕсене илсе тăма çырăнтарасси çине тимлĕн пăхмалла. Ялхуçалăх хаçачĕсемпе журналĕсене вырнаçтарассишĕн Чăваш АССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин, унăн ялхуçалăх пропаганди управленийĕн сыхăну органĕсемпе танах тăрăшас пулать. Халĕ, пирĕн пĕтĕм çĕршыв халăх валли ялхуçалăх продукчĕсем питĕ нумай туса хатĕрлес ĕçе пур майсемпе те вăйлатса пырассишĕн кĕрешнĕ чухне, ялхуçалăх изданийĕсене пĕтĕмĕшпех вырнаçтарни питĕ пысăк вырăн йышăнать. Ялхуçалăх хаçачĕсемпе журналĕсене сарас ĕçе çителĕксĕр туни ялхуçалăхĕнче малта пыракансен опытне, совет агрономи наукин çитĕнĕвĕсене колхоз производствине кĕртес ĕçре чăрмав кӳрет.

Сыхăну органĕсенче ĕçлекенсен, «Союзпичет» работникĕсен пирвайхи тивĕçĕ—октябрĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа ĕçсыннисене 1954 çулшăн хаçат-журнал çырăнтарас ĕçе кашни сыхăну кантурĕнче, агентствинче, «Союзпичет» уйрăмĕнче, хаçат-журнал сутакан киоскра, çавăн пекех тата подписка йышăнма уçнă кашни предприятири, çĕнĕ стройкăри, учреждени, вĕренӳ заведенийĕнчи, колхозри, МТС-ри тата совхозри пунктра кирлĕ пек йĕркелесси пулать. Халĕ сыхăну кантурĕсен, издательствăсен хаçат-журнал çырăнтарасси çинчен ĕçсыннисене анлăн пĕлтерсе тăмалла, çак ĕçре пĕлтерӳсемпе, радиопа, çытарласа кăларнă плакатсемпе усă курмалла.

Хаçат-журнал сарас ĕçе ăнăçлă тăвасси, редакцисемпе издательствăсенчен хăйсенчен нумай килет. Хаçат-журналсен пахалăхне куллен-кун лайăхлатса пымалла, вĕсен идейăлла шайне ӳстермелле, хаçатсемпе журналсене лайăх илемлетсе, вăхăтра кăларса тăмалла. Хаçат-журнал сарас ĕç мĕнле пулса пыни çинчен хаçатсенче йĕркеллĕ çутатса тăмалла. Ку ĕçре малта пыракансен опытне пĕтĕçтерсе сармалла, ĕçсыннисем хушшине хаçат-журнал ытларах сарма тăрăшакансем çинчен ĕçсыннисене каласа кăтартмалла. Хаçатсен редакцийĕсен, Чăваш государство издательствин, Чăваш совет писателĕсен союзĕн правленийĕн хаçатсемпе журналсем сарас ĕçе редакци работникĕсене, писательсене тата корреспондентсен активне анлăн хутшăнтармалла.

1954 çулшăн хаçат-журнал сарас ĕçе пур çĕрте те йĕркеллĕ туса ирттерер! Кашни çемье хаçат-журнал çырăнса илтĕр!

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Рабочисем хăйсен идейăлла-теорилле пĕлĕвне ӳстереççĕ

КПСС XIX-мĕш съезчĕ парти организацийĕсене коммунистсемпе кадрсен идейăлла-теорилле пĕлĕвĕн шайне ӳстерес ĕçе, кадрсене марксизмла-ленинла теорие вĕрентес ĕçе лайăхлатма хушрĕ.

Пирĕн заводри парторганизаци, съезд решенийĕсене пурнăçласа, парти членĕсемпе кандидачĕсене, партире тăман рабочисемпе служащисене тата инженерсемпе техникĕсене вĕрентес ĕç çине кăçал уйрăмах тимлĕрех пăхма тытăнчĕ.

Эпĕ заводри КПСС историне вĕренекенсен кружокĕсенчен пĕрине ертсе пыратăп. Кружокра пурĕ 24 çын—22 коммунист тата партире тăманнисем икĕ çын вĕренет. Вĕсем пурте цехсенче ĕçлеççĕ.

Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче пирĕн кружокăн пĕрремĕш занятийĕ активлă, пысăк ĕçленӳпе иртрĕ. «Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ 50 çул тултарни» ятлă тема тăрăх эпĕ каласу ирттертĕм. Ун хыççăн вĕренекенсем чылай ыйтусем пачĕç тата тухса каларĕç. Вĕсем çак материала лайăх ăнланни палăрчĕ.

Тӳрех каламалла, пирĕн занятисем кичем иртмеççĕ. Эпĕ пĕр-пĕр материала ăнлантарса панă чух е вĕренекенсен ыйтăвĕ çине ответленĕ чух революцилле теорие коммунизм тăвас ĕçпе тачă çыхăнтарса, теори вĕтартнисене пурнăçри тĕслĕхсемпе çирĕплетсе каласа паратăп. Çапла туни коммунистсен производствăри тата политикăлла активлăхне вăйлатать, вĕсем производствăра ответлă туйса, пуçарулă ĕçлеççĕ.

Октябрĕн 8-мĕшĕнче пирĕн кружокăн иккĕмĕш занятийĕ пулса иртрĕ. Унта эпĕ СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕн материалĕсем çинчен, Совет Правительствин пуçлăхĕ Г. М. Маленков юлташăн сессире каланă сăмахĕ çинчен тĕплĕн ăнлантарса патăм. Çав документсене вĕреннĕ чухне эпĕ хамăр заводри ĕçсем çинчен те чарăнса тăтăм. Хăшпĕр цехсенче, участоксенче пĕр тикĕс ĕçлеменнине, машинăсен вăй-хăвачĕпе туллин усă курманнине, брак нумай пулнине, материала перерасходланнине, производство планне тултарса пыманнине тата ытти çитменлĕхсене те кăтартса патăм. Вĕренекенсем активлă тухса каларĕç, хăйсен участокĕсенчи, цехĕсенчи тĕрлĕ фактсене илсе кăтартрĕç.

Кружокра лайăх пĕлӳ илни вĕренекенсене хăйсен ĕçри активлăхне ӳстерме те пулăшать. Сăмахран, Ефимов, Лобастова, Павленко, Никитин юлташсем производствăра лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ, вĕсем ĕçре ялан малти ретре пыраççĕ.

Малашнехи занятисенче эпир КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн материалĕсене вĕренме тытăнатпăр. Парти вĕрентĕвĕн çĕнĕ çулĕнчи малтанхи занятисем акă мĕн çинчен калаççĕ: кружокра вĕренекенсем хăйсен идейăлла-теорилле пĕлĕвĕн шайне ӳстерессишĕн питĕ тăрăшаççĕ, вĕсем марксизмла-ленинла теорие вĕренес ĕçе хăйсен чи пирвайхи тивĕçĕ тесе шутлаççĕ. Вĕренекенсем занятисене пĕр сиктермесĕр çӳрени те, занятисем активлă иртни те çавăн çинчен калаççĕ.

Пирĕн заводăн библиотекинче политикăлла литература тата нагляднăй пособисем çителĕклĕ. Вĕренекенсем вĕсемпе анлăн усă кураççĕ.

Нимĕн иккĕленмелли те çук, кăçалхи вĕренӳ çулĕ заводри рабочисемпе служащисен, инженерсемпе техниксен политикăлла пĕлĕвне тата та ытларах ӳстерме май парĕ. Çавна май ĕç тухăçлăхĕ те ӳсех пырĕ, продукци пахалăхĕ те чылай лайăхланĕ.

Л. МОЧАЛОВ,
электроаппаратура заводĕнчи пропагандист.

Партипе совет работникĕсене вĕрентсе хатĕрлемелли курсра

КПСС Чăваш обкомĕ çумĕнчи партипе совет работникĕсене вĕрентсе хатĕрлемелли курсра занятисем пуçланчĕç.

Республикăри районсемпе хуласенчи тата ялсенчи ертсе пыракан кадрсене вĕрентес ĕçре çак курс пысăк вырăн йышăнса тăрать. Партипе совет ĕçĕнчи ертсе пыракан работниксене вĕрентсе хатĕрлемелли çак тăхăр уйăхлăх курсран юлашки 5 çул хушшинче 537 çын вĕренсе тухнă. Вăл шутран парти райкомĕсемпе хула комитечĕсен секретарĕсем 31 çын, комитет пайĕсен заведующийĕсем 38 çын, инструкторсемпе пропагандистсем 120 çын вĕреннĕ. Çак курсран пысăкрах парторганизацисен секретарĕсем, комсомол работникĕсем тата хаçат ĕçĕнче ĕçлекенсем чылай вĕренсе тухнă. Çавăн пекех совет ĕçĕнчи работниксем те—райсовет исполкомĕсен председателĕсемпе вĕсен заместителĕсем, исполком секретарĕсем тата ытти нумай работниксем çак курсра вĕренсе хăйсен пĕлĕвне ӳстернĕ.

Районсемпе хуласенчен суйласа янă партипе совет работникĕсем — пурĕ 73 çын кăçалхи вĕренĕве хастарăн тытăнчĕç. Вĕсем занятисенче хăйсен активлăхне кăтартаççĕ, марксизм-ленинизм теорине çине тăрса вĕренеççĕ. Вĕренекенсене пурăнма тата вĕренме лайăх условисем туса панă.

Вĕренекенсен составĕ кăçал чылай лайăхланчĕ. Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче курсра парти тата комсомол райкомĕсен секретарĕсем, КПСС райкомĕсемпе хула комитечĕсен пайĕсен заведующийĕсем, инструкторсемпе пропагандистсем, райисполкомсенчи ответлă работниксем чылай вĕренеççĕ. Вĕсем хушшинче пысăкрах предприятисемпе колхозсенчи парторганизаци секретарĕсем—21 çын.

Курсра вĕренекенсем 9 уйăх хушшинче марксизм-ленинизм никĕсĕсене, ССР Союзĕн историйĕн кĕске курсне, ССР Союзĕн тата ытти çĕршывсен экономикăлла тата политикăлла географине, Совет Союзĕн тулашри политикине тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсене, парти строительствине, промышленность ыйтăвĕсене, бюджет ĕçне, вырăс тата чăваш чĕлхипе литературине вĕренеççĕ.

КПСС обкомĕ курс ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттерчĕ. Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленнĕ май, курсра тĕп предметсене вĕрентме пысăк квалификациллĕ преподавательсем уйăрса çирĕплетнĕ. Парти строительстви предмечĕ тăрăх лекцисене КПСС обкомĕн секретарĕсемпе ытти ертсе пыракан работниксем вулаççĕ. Лекцисем вулас ĕçе республикăри уйрăм министерствăсенче ертсе пыракан работниксене те хутшăнтарнă.

Партипе совет работникĕсене вĕрентсе хатĕрлекен курсра, вĕренӳ ĕçне лайăхлатмалли ытти майсемпе пĕрлех, агрокабинет йĕркеленĕ. Агрокабинет вĕренекенсене ялхуçалăх наукипе тĕплĕн паллаштарас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Ялхуçалăхне ертсе пырас тĕлĕшпе малта пыракан опыта вĕрентес тесе, иртнĕ çулта вĕренекенсене республикăра малта пыракан колхоз председателĕсен ĕçĕпе паллаштарса пынă. Сăмахран, вĕренекенсем Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председательне Социализмла Ĕç Геройне В. В. Зайцев юлташа итленĕ. Кăçал çавăн пек тĕлпулусем ытларах тума палăртнă.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ, ялхуçалăх кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлессипе пĕрлех, партипе совет ĕçĕнчи кадрсене те ялхуçалăх наукисене вĕрентме кирлине палăртрĕ. Вĕрентӳ ĕçĕнче эпир çакна ялан асра тытатпăр, вĕренекенсене лайăх пĕлӳ паратпăр, практикăлла ĕçре çĕнĕ ӳсĕмсем тума вĕрентетпĕр.

А. ИВАНОВ,
КПСС Чăваш обкомĕ çумĕнчи парти курсĕн директорĕ.

Занятисене лайăх ирттермелле

ÇĔРПӲ. «Родина» колхозри пуçламăш парторганизаци çумĕнчи парти историне вĕренмелли кружокра иртнĕ вĕренӳ çулĕнче программăпа палăртнă темăсене вĕренсе пĕтереймен. Ку вăл занятисене йĕркеллĕ ирттерменнинчен килнĕ.

Кăçалхи çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче çавăн пек çитменлĕхсем пулмаççĕ пулĕ тесе шанмаллаччĕ. Анчах пирвайхи занятие 14 çынтан 9 çын кăна пычĕç. Парторганизаци секретарĕ А. Платонов, коммунистсем В. Васильев, В. Никитина юлташсем нимĕнле сăлтавсăрах занятие пымав, вĕсене кĕтсе ларнă пирки, занятие малтан палăртниинчен пĕр сехет çурă каярах тин пуçланчĕ.

«КПСС 50 çул тултарни» çинчен пропагандист Н. Ельмаков юлташ каласа панине вĕренме пынисем тимлĕн итлеме тата ăнланса юлма тăрăшрĕç. Анчах та темăна васкавлăрах хатĕрленнĕ пирки пропагандист вĕренекенсен ĕмĕтне тивĕçтереймерĕ, темăна кирлĕ таран ăнлантарса памарĕ, çиелтен кăна каласа пачĕ. Çавăн пирки ĕнтĕ занятире пулнисенчен чылайăшĕ партин иккĕмĕш съезчĕн историллĕ пĕлтерĕшĕ çинчен те, В. И. Ленин çĕннĕ тăрăх йышăннă программăн тĕп пĕлтерĕшĕ мĕнре тăнине те, «экономистсем» камсем иккенне те пĕлсе юлаймарĕç. Пропагандист КПСС историйĕн хальхи тапхăрĕ çинчен каланă чухне социализмран майĕпен коммунизма куçса пынă вăхăтра Коммунистсен партийĕн авангардлă ролĕ мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине пачах та асăнмарĕ. Ельмаков юлташ занятие ирттерме çак тема тăрăх конспект та çырса хатĕрлемен. Çавăнпа та вăл каласăва тĕплĕн ирттереймерĕ.

Программăпа палăртнă тăрăх, пропагандист каласа панă темăпа каласу пулмаллаччĕ, анчах та занятире пулнисем каласма мар, пропагандиста пĕр ыйту та памарĕç, занятие икĕ сехет хушши пулмаллаччĕ, пĕр сехет хушшинчех вĕçленчĕ.

С. ШАДИН.

Чăваш АССР Министрĕсен Советĕнче

Финанс органĕсен 1953 çулхи виççĕмĕш кварталти финанс планне тултарассишĕн социализмла ăмăртса ĕçленин итогĕсем

Республикăри финанс органĕсен 1953 çулхи виççĕмĕш кварталта социализмла ăмăртса ĕçленин итогĕсене пăхса тухса, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ ăмăртура Канаш хулинчи финанс пайĕ мала тухнине палăртнă (хула Совет исполкомĕн председателĕ Синицын юлташ, хулари финанс пайĕн заведующийĕ Шляпникова юлташ).

Канаш хулинчи финанс пайĕ кăçалхи виççĕмĕш кварталти плана халăхран укçа-тенкĕ пухас енĕпе 105,6 процент, çав шутра: налогсем енĕпе—101,9 процент, государство страхованийĕ енĕпе—128,1 процент, перекет касси енĕпе—112,6 процент, государство тупăшĕсем енĕпе 103,0 процент тултарнă.

Канаш хулинчи финанс пайне Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тата преми 5.000 тенкĕ памалла тунă.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ республикăри финанс органĕсен социализмла ăмăртăвĕнче Улатăр хулинчи финанс пайĕ иккĕмĕш вырăна тухнине палăртнă (хула Совет исполкомĕн председателĕ Харитонов юлташ, хулари финанс пайĕн заведующийĕ Бесчастнова юлташ).

Улатăр хулинчи финанс пайĕ кăçалхи виççĕмĕш кварталти плана халăхран укçа-тенкĕ пухас енĕпе 105,5 процент, çав шутра: налогсем енĕпе—101,9 процент, государство страхованийĕ енĕпе—101,2 процент, государство тупăшĕсем енĕпе 101,4 процент тултарнă.

Улатăр хулинчи финанс пайне иккĕмĕш преми—4.000 тенкĕ памалла тунă.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ кăçалхи виççĕмĕш кварталти финанс планне пурнăçлас тĕлĕшпе Шупашкар хулинчи финанс пайĕ лайăх ĕçленине палăртнă.

Куншăн пĕрлех Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ 1953 çулхи виççĕмĕш кварталти финанс планне тултарас тĕлĕшпе Хĕрлĕ Чутай, Кувакино, Калинино, Етĕрне, Пăрачкав, Шăмăршă, Сĕнтĕр тата Тăвай районĕнчи финанс пайĕсем начар ĕçленине палăртнă. Ку районсен исполкомĕсен председателĕсене финанспа бюджет ĕçне лайăхлатма тата тăваттăмĕш кварталти финанс планне пĕтĕмпех тултарма хушнă.

Машинăсем туянаççĕ

Республикăри потребительсен кооперацийĕ государствăна ялхуçалăх продукчĕсемпе вылăх-чĕрлĕх продукцийĕ сутакан колхозсене тĕрлĕ машинăсем парать. Кăçалхи 9 уйăх хушшинче Чăвашпотребсоюз урлă республикăри колхозсем 98 автомашина туяннă. Калинино районĕнчи «Трактор» колхоз, Кувакино районĕнчи «Новь» колхоз, Советски районĕнчи Горький ячĕпе тăракан колхозсем кăçал икшер автомашина илнĕ. Колхозсем автоприцепсем те чылай илеççĕ. Çак вăхăт хушшинче колхозсене 16 автоприцеп сутнă.

Колхозсенче хăма çурас ĕçе механизацилеме хăма çуракан 25 рама сутнă.

Колхоз производствинчи йывăр ĕçсене механизацилеме тата электрификацилеме кăçал 20 электромотор, нефтедвигательсем 14, газогенераторлă двигательсем 4, кирпĕч çапакан пĕр агрегат, куçса çӳрекен электростанцисем 8 сутнă.

Совет Правительстви Ирĕклĕ Триест Территорийĕ çинчен тăракан ыйту пирки США тата Англи Правительствисене панă нота

Октябрĕн 12-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерстви США-н Мускаври Посольствине Совет Правительстви Ирĕклĕ Триест Территорийĕ çинчен тăракан ыйту пирки çырнă нотăна ярса панă. Аяларахра çак нотăна пичетленĕ.

«Октябрĕн 8-мĕшĕнче США тата Великобритани Правительствисем хăйсен Ирĕклĕ Триест Территорийĕн «А» зонине Итали Правительствине парас пирки решени йышăнни çинчен пĕлтернĕ. США-па Великобритани Правительствисен çак ĕçĕ асăннă Территорие пайлассине пĕлтерет. Ку вăл Италипе тунă Мирлĕ Договорта Ирĕклĕ Триест Территорийĕ туса хурасси çинчен калакан условисене сĕмсĕррĕн пăсни пулать.

Паллă ĕнтĕ, Италипе тунă Мирлĕ Договор тăрăх, Ирĕклĕ Триест Территорийĕ туса хумалла, вăл нейтральнăй тата демилитаризациленĕ çĕршыв пулмалла, ăна вăхăтлăх режим çинчен йышăннă Положени тăрăх тата Ирĕклĕ Триест Территорийĕ çинчен калакан Яланхи Статут тăрăх тытса тămalla. Çак положенипе статут асăннă Территорири халăха демократиллĕ правасемпе тĕп ирĕклĕхсем параççĕ. Мирлĕ Договор тăрăх, ООН Хăрушсăрлăх Совечĕн Ирĕклĕ Триест Территорийĕн Губернаторне уйăрса лартмалла, çавăн хыççăн Территорин Вăхăтлăх Правительство Советне туса хумалла, Учредительнăй Пуху пухмалла тата Конституци туса хатĕрлемелле. Çавăн пекех Мирлĕ Договор Губернатора уйăрса лартнă хыççăн 135 кун иртсен Ирĕклĕ Территорирен ют çĕршывсен мĕнпур çарĕсене илсе тухма палăртса хурать.

—США, Великобритани, Франци, СССР,—Италипе Мирлĕ Договор тăвас ĕçе хутшăннă ытти 17 çĕршыв пекех,—йышăннă обязательствăсем тăрăх, тăватă çĕршывăн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен Совечĕ 1946 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕнче йышăннă Протокол тăрăх, Пĕрлешӳллĕ Штатсем, Великобритани, Франци тата Совет Союзĕ Италипе тунă Мирлĕ Договор вăя кĕнипе пĕр вăхăтрах Хăрушсăрлăх Совечĕ енчен Ирĕклĕ Триест Территорийĕн Губернаторне уйăрса лартмалла тума пулнă.

США Правительстви, Великобритани Правительстви пекех, Ирĕклĕ Триест Территорийĕ туса хурас тĕлĕшпе хăйсем йышăннă обязательствăсене пурнăçламан пирки çак постановленисене пĕрне те пурнăçа кĕртмен.

Çакă вăл чи малтан США-па Великобритани Правительствисем Хăрушсăрлăх Советĕнче Губернатор пулма тăратнă кандидатурăсене пурне те сирсе янинче курăнчĕ. Вĕсен кун пек тума нимĕнле сăлтав та пулман. США-па Великобритани Правительствисем çав вăхăтрах тата Хăрушсăрлăх Советĕнче хăй вăхăтĕнче хăйсем тăратнă кандидатсене те Губернатор пулма уйăрса лартма килĕшмен.

Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Великобритани хăйсем йышăннă обязательствăсене пăснин çавăн пекех тата Триестра саккунсăр йĕркепе Англипе Америкăн çар тата тинĕс-çар базине туса хунинче те палăрать. Çак база, вĕсен шучĕпе, агрессилле Çурçĕр Атлантика блокĕн вăрçă плавĕсенче пысăк вырăн йышăнса тăмалла.

США-па Великобритани Правительствисем хăйсен пĕлтерĕвĕнче пурте пĕлсе тăракан фактсене урăхла кăтартма тăрăшаççĕ, «Мирлĕ Договора палăртнă пек Ирĕклĕ Территори валли яланхи режим туса хурасси çинчен Мирлĕ Договор çине алă пуснă ытти çĕршывсемпе килĕшсе татăлма май килмен пирки» Ирĕклĕ Триест Территорийĕ тĕлĕшпе çавăн пек ĕçсем тумалла пулнă, тесе кăтартса пама хăтланаççĕ вĕсем. Çав вăхăтрах Ирĕклĕ Триест Территорийĕн Губернаторне уйăрса лартасси çинчен тăракан ыйтăва Хăрушсăрлăх Советĕнче сӳтсе явнă чухне США тата Великобритани йышăннă позици çинчен калакан фактсем Италипе тунă Мирлĕ Договорăн Ирĕклĕ Триест Территорийĕ туса хурасси çинчен калакан условийĕсене пурнăçлассине шăпах та США-па Великобритани путлантарса лартни çинчен тата халĕ те путлантарса пыни çинчен калаççĕ.

Совет Правительстви хăйĕн 1951 çулхи ноябрĕн 17-мĕшĕнче тата 1952 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнче панă нотисенче США-па Великобритани Правительствисене Ирĕклĕ Триест Территорине пайлани Европăн çак районĕнче мирпе хăрушсăрлăх туса хурас задачăсемпе килĕшсе тăманнине тата ун пек ĕçсем çĕнĕрен йывăрлăхсем кăна кăларма пултарнине асăрхаттарнăччĕ. Асăннă нотăсенче çавăн пекех тата çакна та палăртнă: çак Территорие пайлани унта пурăнакан халăх интересĕсене те хирĕç пырать, ăна Ирĕклĕ Триест Территорийĕн Яланхи Статучĕпе пăхса хунă демократиллĕ правасемпе усă курма май памасть.

Фактсем çакăн çинчен калаççĕ: США-па Великобритани Правительствисем Италипе тунă Мирлĕ Договора пăсни пурпĕрех государствăсем хушшинче, чи малтан, Ирĕклĕ Триест Территорийĕпе кӳршĕллĕ çĕршывсем хушшинче хирĕçӳсем вăйланасси патне илсе пырать тата çак районта мирпе хăрушсăрлăха хăратса тăрать.

Çакăнта каланисем тăрăх Совет Правительстви çапла калама кирлĕ тесе шутлать: Италипе тунă Мирлĕ Договора çакăн пек сĕмсĕррĕн пăснинчен тухса тăракан мĕнпур ĕçсемшĕн пĕтĕмпех Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Великобритани Правительствисем ответлă пулса тăраççĕ.

Çакăн пек нотăна Великобритани Правительствине те ярса панă».

Планран ирттерсе пир-авăр

ВИТЕБСК, октябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Областри çăмăл промышленность предприятийĕсем куллен кирлĕ таварсем ытларах та ытларах туса кăлараççĕ, вĕсен ассортиментне пысăклатаççĕ тата пахалăхне лайăхлатаççĕ.

Витебскри чăлхапа трикотаж туса хатĕрлекен «КИМ» фабрикăри 50 бригада ытла ĕнер октябрĕн иккĕмĕш çур уйăхлăхĕ шучĕпе продукци тума тытăннă.

Оршăри пир-авăр тĕртекенсем ĕç хăвăртлăхне ӳстерсе пыраççĕ. Пĕтĕм комбинатăн цехĕсенче кашни кун заданирен ирттерсе пиншер метр пир-авăр туса кăлараççĕ. Предприяти коллективĕ çулталăкри плана срокчен тултарса, планран ирттерсе 13 миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларма пулнă. Ĕнер заданирен ирттерсе икĕ миллион метр пир-авăр тĕртсе хатĕрленĕ.

Коммунизмшăн хăюллă кĕрешнĕ паттăр

(С. Г. Шаумян çуралнăранпа 75 çул çитнĕ тĕле)

1953 çулхи октябрĕн 13-мĕшĕнче Степан Георгиевич Шаумян çуралнăранпа 75 çул çитрĕ. Вăл Коммунистсен партийĕпе Совет государствин паллă деятелĕ, аслă Ленинăн шанчăклă ученикĕ тата çывăх соратникĕ пулнă.

Степан Шаумян хăйĕн пĕтĕм пурнăçне ĕççыннисене пусмăрпа чуралăхран ирĕке кăларассишĕн паттăррăн кĕрешсе ирттернĕ. Талантлă мыслитель, чаплă публицист тата массăсен революцилле кĕрешĕвĕн хастар организаторĕ пулса, вăл хăйĕн вăйĕпе пĕлĕвĕсене аслă ĕçе панă.

Степан Шаумян революционерăн кĕрешӳри мухтавлă çулне утса тухнă. Çамрăк чухнех, Тифлисри реальнăй училищĕре вĕреннĕ вăхăтра, вăл вĕренекенсен вăрттăн организацийĕсенче питех те активлă ĕçленĕ, вĕренекенсен кружокĕ кăларса тăнă «Радуга» ятлă хаçата редакциленĕ.

Çамрăк революционерăн мировоззренийĕ Российăра XX-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче революцилле тăвăл çĕкленсе пынă вăхăтра, вăрттăн тухса тăнă революцилле литература—Маркс, Энгельс, Ленин произведенийĕсен влиянийĕпе йĕркеленсе çитнĕ. 1900 çулта Шаумян РСДРП ретне кĕнĕ.

Реальнăй училищĕрен вĕренсе тухнă хыççăн С. Г. Шаумян Ригăри политехника институтне вĕренме кĕрет, кунта вăл социал-демократилле кружоксенче активлăн ĕçлеме тытăнать. 1902 çулта ăна революцилле ĕçе хутшăннăшăн институтран кăларса Кавказа янă. Унтан Шаумян часах Германие тухса каять, Берлинти университетăн философи факультетне, политика отделенине вĕренме кĕрет. 1903 çулта С. Г. Шаумян Женева хулинче малтанхи хут Владимир Ильич Ленинпа тĕл пулать.

Çак тĕлпулу çамрăк революционер пурнăçĕнче калама çук пысăк вырăнта тăнă. С. Г. Шаумян татăклăнах большевиксен çулĕ çине, ленинизм çулĕ çине тăнă, хăй пурнăçĕнче вара çак çул çинчен никçан та пăрăнман.

Ют çĕршывран Тифлиса таврăнсан, С. Г. Шаумян пĕтĕм вăйне революцилле кĕрешĕве парать. Ăна РСДРП-ăн Кавказри Союзлă Комитечĕн составне кĕртнĕ, çав комитета И. В. Сталин ертсе пынă. С. Г. Шаумян активлă ĕçе тытăнать, рабочисен массăллă политикăлла демонстрацийĕсемпе забастовкисене ертсе пырать.

Партин Кавказ леш енчи организацийĕн паллă руководителĕсенчен пĕри пулса, Степан Шаумян РСДРП IV-мĕш тата V-мĕш съезчĕсен ĕçне хутшăнать.

Парти пурнăçĕнчи организацилле ĕçсене туса пынă вăхăтрах Шаумян, вĕреннĕ марксист пулса, теорилле ĕçе ăнăçлăн туса пырать, революцилле марксистла идеологин чаплă пропагандисчĕ пулса тăрать. Вăл Кавказ леш енче тухса тăнă мĕнпур большевикла хаçатсене тӳрех ертсе пыракансенчен тата çав хаçатсенче ялан ĕçлекенсенчен пĕри пулнă. Б. Кнунянц, С. Спандарян тата ыттисем активлă пулăшнипе Шаумян армян чĕлхипе тухса тăракан революцилле марксистла пичет ĕçне пуçласа янă.

Вырăссен малтанхи революцийĕ поражени тӳснĕ хыççăн столыпинла реакци пуçланнă вăхăтра Шаумян Баку хулинче ĕçленĕ. Джапаридзепе, Азизбековпа, Спандарянпа, Фиолетовпа, Орджоникидзепе тата РСДРП-ăн Бакури Комитетне кĕрекен ытти юлташсемпе пĕрле Шаумян Бакури нумай нацилĕ пролетариат хушшинче организаторла ĕçпе пропаганда ĕçне пысăк хастарлăхпа туса пынă.

Вăрттăн ĕçленипе уçăн ĕçленипе çыхăнтарса пыма кирли çинчен Ленин кăтартса панине асра тытса, С. Г. Шаумян И. В. Сталинпа пĕрле рабочисемпе нефтепромышленниксен хушшинче коллективлă договор тăвас тĕлĕшпе паллă вырăнта тăракан кампание ертсе пынă. Çав вăхăтрах С. Г. Шаумян партин вăрттăн ĕçне туса пынă: вăрттăн типографисем тунă, листовкăсем, прокламацисем çырнă, большевиксен вăрттăн тухса тăракан хаçачĕсемпе журналĕсенче ĕçленĕ.

Реакцин йывăр çулĕсенче С. Г. Шаумян публицистикăлла литературăпа критикăлла статьясем чылай çырнă, çав статьясенче вăл буржуазипе ун майлисен *идеологилле фронтра тапăннине татăклăнах* отпор панă.

«Вулакан аптраса тăни» (1910 ç.), «Л. Н. Толстой тĕнĕ çинчен пĕр-ик сăмах» *(1911 ç.)* ятлă статьясенче С. Г. Шаумян, Толстой аслă художник пулнине палăртса, çав вăхăтрах Толстой творчествин вăйсăр, йăнăш енĕсене çӳле çĕклеме хăтланнине—унăн идеалистла тĕн шухăшĕсене пропагандăланине ним шеллемесĕр критикленĕ.

Вилекен классен пăсăлса пыракан, шанăçа çухатнă литературине хирĕç Шаумян литературăра социализмла реализм никĕсне хывакан писатель М. Горький произведенийĕсене, пролетариат ĕçĕ çĕнтерессе çирĕп шанма чĕнекен произведенисене тăратнă. М. Горький рабочисен юратнă писателĕ пулса тăчĕ, тесе çырнă С. Г. Шаумян, мĕншĕн тесен вăл «...хăйĕн художник талантне пролетарисен класне пачĕ, вĕсемпе пĕр ялав айне тăчĕ, вĕсен пурнăçĕн юрăçи пулчĕ». Буржуалла çыравçăсем Горькие тапăннине хирĕç тăрса, Шаумян Горькие «пролетарилле литературăн илемĕпе мухтавĕ» тенĕ.

Шаумянăн пролетарилле партилĕх шухăшĕпе çырнă литературăпа критикăлла статьисем марксистла-ленинла эстетикăра пысăк пуянлăх пулса тăраççĕ. Вĕсенче литературăпа искусствăн чылай паллă ыйтăвĕсене диалектикăлла материализмла татса панă.

С. Г. Шаумян буржуалла историографие критиклесе çырнă статьясенче те общество пурнăçĕнчи явленисем тĕлĕшпе материалистла шухăшсене çирĕп хӳтĕленĕ. Сăмахран, «В. Папазян историк ролĕнче» (1912 ç.) ятлă чаплă статьяра Шаумян çакна кăтартса панă: истори çинчен юмахла-фантазилле çырса, автор истори çине идеалистла пăхать, историе паттăрсемпе полководецсен ĕçĕ вырăнне хурать, тенĕ.

«Историри событисене, пулни-иртнисене, историри уйрăм çынсен ĕçсене тĕплĕн критиклесе сутатса парсан кăна, событисемпе çынсен ĕçĕ хушшинчи сăлтавлă çыхăнăва тата закономерноçа кăтартса парсан кăна истори юмах, ахаль калав пулма *пăрахать тата чăн-чăн истори пулса тăрать»*, — тесе çырнă Шаумян.

Революци çĕнĕрен çĕкленес вăхăт çывхарса килнĕ тапхăрта, *аслă Ленин Прагăри конференцие* пухассишĕн кĕрешӳ пуçласа янă чухне, Шаумяна конференци пухас тĕлĕшпе ĕçлекен оргкомисси составне кĕртнĕ. Часах ăна патша охранки арестлесе Астрахане янă. Кунта вăл революцилле ĕçе малалла туса пырать, теорилле ыйтусене татса парас тĕлĕшпе ĕçлет. Уйрăмах ăна наци ыйтăвĕ интереслентерет, ку ыйту тăрăх вăл чылай произведенисем çырнă.

Буржуази хĕвеланăçĕнчи империализм хуттинче хăйĕн «никама пăхăнман» государствине тума тăрăшнин класлă содержанине С. Г. Шаумян ним шеллемесĕр тĕрĕ шыв çине кăларнă. Дашнаксем, «спецификсем», национал-федералистсем тата ытти буржуалла-националистла партисемпе ушкăнсем хӳтĕлекен культурăлла-нацилле автономи лозунгне хирĕç Шаумян çине тăрса кĕрешнĕ. Хăйĕн чылай произведенийĕсенче («Культурăлла-нацилле автономи çинчен», «Интеллигенци тата национализм» тата ытти те) Шаумян çак лозунгăн реакцилле содержанине тĕрĕ шыв çине кăларнă, вăл большевиксен принципне—пур нацисене те уйрăлас таранах самоопределени правине пама ыйтакан принципа пур енĕпе те тĕплĕн никĕслесе панă. Анчах нацисене уйрăм государство тăвас таранах право пама ыйтни пурпĕрех сепаратизм позицийĕ патне, нацисем пурпĕрех уйрăлассин патне илсе пымасть, тенĕ вăл.

Нацисен самоопределени правине хӳтĕленĕ пекех, Шаумян наци ыйтăвĕ тăрăх партин программин тепĕр паха требованине—пролетариатăн класлă организацийĕсене интернационализмла тăвас принципа хӳтĕленĕ.

Пĕрремĕш тĕнче вăрçи умĕн Шаумян большевиксен Бакури организацине ертсе пынă. Вăрçă вăхăтĕнче вăл империализмла вăрçăран граждан вăрçине куçмалла текен Ленинла лозунга çине тăрса хӳтĕленĕ, пĕтĕм тĕнчери тата Российăри социал-шовинистсен сутăнчăкла ирсĕр ĕçне питленĕ.

*1917 çулхи февральти буржуалла-де*мократилле революци çĕнтернĕ хыççăн, С. Г. Шаумяна хăйсĕр пуснех, вăл ссылкăран Баку хулине пыма тухнă вăхăтра, *Бакури пролетариат рабочисемпе салтак*сен депутачĕсен Совечĕн председателĕ пулма суйланă. Баку хулине таврăнсан, вăл Азизбековпа, Джапаридзепе, Фиолетовпа тата большевиксен организацийĕн ытти руководителĕсемпе пĕрле Советсен ытларăхăшне большевиксем майлă çавăрма, пĕтĕм власа Советсен аллине пама кĕрешӳ пуçласа янă. VI-мĕш съездра С. Шаумяна партин Центральнăй Комитечĕн членне суйланă, 1917 çулхи сентябрьте вăл В. И. Ленин хĕçпăшаллă восстани организацилесси çинчен çырнă çырăва сӳтсе явма пухăннă Центральнăй Комитет членĕсен канашлăвĕнче пулнă.

Октябрьти Социализмла Аслă революци çĕнтернĕ хыççăн, Шаумянпа унăн соратникĕсем Кавказ леш енне социализмла Российăпа пĕрлештерессишĕн, Кавказ леш енче совет власне çирĕплетессишĕн кĕрешӳ пуçласа янă. 1917 çулхи декабрьте Совет правительстви В. И. Ленин хутшăнса ĕçленипе Кавказри лару-тăру çинчен тăракан ыйтăва сӳтсе явнă. Çавăн хыççăн Шаумяна Кавказ ĕçĕсем тăрăх вăхăтлăх Чрезвычайнăй Комиссар туса хуни çинчен декрет кăларнă. Çав декрет çине Ленинпа Сталин алă пуснă.

1918 çулта, март уйăхĕнче реакцилле вăйсем, империалистсем пулăшнипе, власа тытса илес шутпа пăлхав тунă. Бакури ĕççыннисем контрреволюцилле пăлхава ним шеллемесĕр пусарнă. Хулара тата хула районĕсенче власть пĕтĕмпех Бакури Совет аллине куçнă. Халăх Комиссарĕсен Совечĕне туса хунă. Ăна Шаумян, Джапаридзе, Азизбеков, Фиолетов тата ыттисем те ертсе пынă. Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ пулма Степан Георгиевич Шаумяна суйланă.

Пĕтĕм Кавказ леш енне сарăлнă революцилле юхăма ертсе пырса, Шаумян ĕççыннисен интернационалла пĕрлĕхне пур майсемпе те çирĕплетме, паттăр вырăс пролетариачĕпе çыхăну тытма тăрăшнă. Дашнаксен, муссаватистсен, меньшевиксен националистла ирсĕр политикине тĕрĕ шыв çине кăларса, вăл вĕсен йăхсăр *тĕпсĕр космополитизмне* питленĕ, вĕсем «варягсене чĕнмелли» планĕ Кавказри тата пĕтĕм Российăри ĕççыннисен интересĕсене сутмалли план пулса тăнине *кăтартса панă*.

Шаумян ертсе пыракан Бакури Совнаркомăн çирĕп те татăклă политикине аслă Ленин ырласа, пулăшса пынă. В. И. Ленин çапла каланă: «Англипе Франци империалисчĕсемпе тума сĕнекен килĕшĕве те татăклăнах хирĕç пыни вăл—Бакури юлташсен пĕртен-пĕр тĕрĕс ĕçĕ, мĕншĕн тесен империалистсене чĕнни социализмла никама пăхăнман власа, пĕр çĕрте çеç пулин те, пурпĕрех империализмла вăрçă чури туса хурать» (В. И. Ленин. Соч., 28 том, 6 стр.).

Бакури ĕççыннисем ют çĕршыв интервенчĕсемпе вĕсен ирсĕр агентурине хирĕç паттăррăн кĕрешнĕ. Анчах оккупантсен вăйĕ нумай ытларах пулнă пирки тата контрреволюцилле буржуалла-националистла партисем сутăнчăкла ĕçсем тунипе 1918 çулта август уйăхĕнче Бакура совет власĕ вăхăтлăха пĕтсе ларнă.

1918 çулхи сентябрĕн 20-мĕшĕнче тăшман аллине лекнĕ Степан Шаумянпа унăн 25 паттăр юлташне Англи империалисчĕсемпе вĕсен эсерла-меньшевикла тарçисем вăрттăн, ирсĕр майпа вĕлернĕ.

Коммунизмшăн хăюллă кĕрешнĕ, хăйĕн мухтавлă пурнăçне пĕтĕмпех марксизм-ленинизмăн аслă идейисем çĕнтерессишĕн кĕрешме панă Степан Шаумян ячĕ миллионшар совет çыннисен ĕмĕр асра юлĕ.

Г. МАРТИРОСЯН,
Армени Компартийĕн Центральнăй Комитечĕн секретарĕ.

Çĕрулмипе пахча çимĕç хатĕрлессине хăвăртлатар

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ çĕрулмипе пахча çимĕç туса илессине татăклăн вăйлатма хушрĕ. Çитес икĕ-виçĕ çул хушшинче çĕрулмипе пахча çимĕç туса илес ĕçе анлă сармалла. Вĕсене халăх ыйтăвĕсене, çавăн пекех вĕсенчен тĕрлĕ çимĕçсем тăвакан промышленность ыйтăвĕсене пĕтĕмпех тивĕçтермелĕх туса илмелле. Çавăнпа пĕрлех выльăх апачĕ те çĕрулми нумай туса хатĕрлеме тытăнмалла.

Халăха çĕрулмипе пахча çимĕç парса тăрассине лайăхлатас ĕçре 1953 çулта çав культурăсене ăнăçлăн пухса кĕртсе хатĕрлени тата сутăн илсе хуни пысăк вырăн йышăнать. КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ çĕрулмипе пахча çимĕç хатĕрлемелли тата сутăн илмелли плана ăнăçлăн тултарма хушса хăварчĕ.

Çĕрулмипе пахча çимĕç хатĕрлесси, вĕсене турттарса тухса хĕллехи вăхăтра усрама хурасси ответлă задача пулса тăрать. КПСС Чăваш обкомĕн çак кунсенче пулса иртнĕ пленумĕ республикăри колхозсенче çĕрулмипе пахча çимĕçсене пухса кĕртесси çителĕксĕр пулса пынине палăртрĕ, парти, совет, ялхуçалăх тата хатĕрлев органĕсене çав культурăсене хăвăртрах пухса кĕртмелле тата хатĕрлев планне тултармалла тума хушса хăварчĕ.

Республикăри суту-илӳ организацийĕсен кăçал хуласенче пурăнакан халăха сутма, ача учрежденийĕсемпе сывлăх учрежденийĕсем валли 5 пин тонна çĕрулми тата 2.750 тонна пахча çимĕç хатĕрлемелле. Октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне илсен, çĕрулми хатĕрлемелли плана 45,4 процент, пахча çимĕç хатĕрлемелли плана 73 процент тултарнă.

Плана тултарас тĕлĕшпе Чебторг тата столовăйсемпе ресторансен тресчĕ юлса пыраççĕ. Çĕрулмине хĕллехи вăхăтра усрама хурасси уйрăмах çителĕксĕр пырать. Столовăйсемпе ресторансен трестĕ, Чăвашторгăн Атăл леш енчи пайĕ хĕллехи вăхăтра усрама çĕрулми нимĕн чухлĕ те хуман-ха. Асăннă организацисен руководителĕсем ĕçсем япăх пулса пынине çанталăк йĕпе тăнипе ăнлантарса пама пăхаççĕ. Ку—пачах тĕрĕс мар. Канаш станцийĕнчи буфет, Чăвашторгăн Канашри уйрăмĕ çĕрулмипе пахча çимĕç хатĕрлемелли плана тултарнă та ĕнтĕ, Чăвашторгăн Улатăрти уйрăмĕ плана çывăх вăхăтрах тултарать. Çак тĕслĕхсем çĕрулмипе пахча çимĕç хатĕрлеме тивĕçлĕ организацисен плана тултарма условисем çителĕклĕ пулни çинчен калаççĕ. Ку пысăк ĕçĕн ответлăхне тивĕçлипе туйса илни, ĕçе кирлĕ пек йĕркелеме тăрăшни кирлĕ.

Çĕрулмипе пахча çимĕç хатĕрлесси çителĕксĕр пулса пыни вĕсене пухса кĕртесси юлса пынинчен нумай килнĕ. Уйрăмах Октябрьски, Буславкка, Сĕнтĕрвăрри, Советски, Улатăр районĕсем юлса пынине палăртмалла. Çак çитменлĕхе хăвăртрах пĕтермелле. Çĕрулми кăларма мĕнпур колхозниксене тата ялсенче пурăнакан ытти çынсене хутшăнтармалла, кашни сехетпе туллин усă курса, çывăх вăхăтра çĕрулмине пĕтĕмпех пухса кĕртмелле.

Çĕрулми кăларнă çĕрте ĕçлекен колхозниксене тата ытти çынсене хавхалантарас шутпа, СССР Министрĕсен Совечĕ кăçал вĕсене кăларнă çĕрулмин 10 проценчĕ чухлĕ валеçсе пама сĕнчĕ. Çак постановлени çинчен колхозниксене анлăн ăнлантарса парас пулать. Ку вăл çĕрулми кăларас ĕçе хăвăртрах вĕçлеме май памалла.

Хатĕрлев пункчĕсене çĕрулми турттаракан колхозниксене турттарса тухнă çĕрулмин 10 проценчĕ чухлĕ памалла тунă. Правительствăн çав решенийĕ çинчен колхозниксене ăнлантарса парас ĕçе тивĕçлипе йĕркелемен-ха. Райисполкомсен çĕрулми хатĕрлес ĕç мĕнле пынине куллен тĕрĕслесе тăрас пулать. Хатĕрлев пункчĕсене çĕрулми турттарас ĕçре колхозсен турттăм вăйĕпе, предприятисемпе учрежденисен тата автобазăсен автомашинисемпе усă курмалла.

Республикăри хуласене çĕрулмипе пахча çимĕç турттарса парасси çителĕксĕр тăни суту-илӳ организацийĕсен руководителĕсем ку ĕçе ертсе пыманнинчен килнĕ. Вĕсем районсемпе колхозсенче пулнипе пĕрех, вĕсен транспорчĕпе усă курасси çинчен калаçса татăлман. Çавăнпа пĕрлех çĕрулмипе пахча çимĕç турттарас ĕçре суту-илӳ организацийĕсем хăйсен машинисемпе те çителĕклĕ усă курмаççĕ.

Кăçал суту-илӳ организацийĕсем государство хатĕрлевĕ шучĕпе çĕрулмипе пахча çимĕç нумай илеççĕ. Хатĕрлев кăкĕсене ӳстерни сутăн илмелли плана тултарма кăна мар, ирттерсе тултарма та май парать. Суту-илӳ организацийĕсен çав майпа туллин усă курмалла. Хĕллехи вăхăтра çĕрулмипе пахча çимĕç татти-сыпписĕр сутмалла пултăр.

Çĕрулмипе пахча çимĕç хатĕрленипе пĕр вăхăтрах вĕсене сутас ĕçе те анлăн туса пымалла. Халлĕхе ку ĕç тивĕçлипе пулса пырать теме çук. Хатĕрлев ĕçĕсене туса пыни суту-илĕве хавшатмаллине пĕлтермест. Çакна суту-илӳ организацийĕсен руководителĕсем ялан асра тытса тăма тивĕç. Шупашкарта çĕрулмипе пахча çимĕç сутма ятарласа палата тума палăртнă. Палатăна хăвăртрах туса пĕтерсе, унта суту-илӳ ĕçне йĕркелени кирлĕ.

Халĕ столовăйсенче пахча çимĕçрен пĕçернĕ апатсем час-часах пулмаççĕ. Кăна пысăк çитменлĕх тесе шутлас пулать. Пур столовăйсенче те винегретсем, салатсем, пахча çимĕçрен пĕçернĕ вĕри апатсем пулмалла.

Хатĕрлев ĕçĕнче уйрăм хуçалăхсем паракан çĕрулми пысăк вырăн йышăнать. СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ потребительсен кооперацине уйрăм хуçалăхсенчен çĕрулми илессине мĕнпур магазинсенче йĕркелеме хушрĕ. Çапах та, иртнĕ çулсенчи пекех, райпотребсоюзсем çĕрулми илме япăх хатĕрленчĕç. Хăшпĕр магазинсен заведующийĕсем çĕрулми илсе чăрманасшăн мар. Сăмахран, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Штанашри ялпо «Путь к коммунизму» тата Киров ячĕпе тăракан колхозсенче çĕрулми илме сентябрĕн 29-мĕшĕнче тин тытăннă. Çав ялпо лавккин продавецĕ Корзинкин юлташ çĕрулми илесшĕн мар пулса турткаланса тăнă.

Хатĕрлев организацийĕсенче ĕçлекенсем хушшинче дисциплинăна татăклăн лайăхлатмалла, уйрăм хуçалăхсенчен çĕрулми илессине пур çĕрте те организацилени кирлĕ. Колхоз правленийĕсен çĕрулмине хатĕрлев пункчĕсене турттарса тухас ĕçре колхозниксене пулăшу памалла.

Çапла ĕнтĕ, çĕрулмипе пахча çимĕç хатĕрлес ĕçре районсенче пысăк çитменлĕхсем пур. Çав çитменлĕхсене пĕтересси, хатĕрлев ĕçĕсене вăйлатасси партипе совет, хатĕрлев, суту-илӳ организацийĕсен задачи пулать. Хатĕрлев ĕçĕсене туса пыракан организацисен республикăри хуласенче пурăнакансем валли çĕрулмипе пахча çимĕç çителĕклĕ таранах хатĕрлесе хумалла, çавăн пекех çĕршыври хуласемпе промышленность центрĕсене вăхăтра турттарса кайма мерăсем йышăнмалла.

А. МАЛЫШЕВ,
Чăваш АССР Суту-илӳ министрĕ.

Медицина учрежденийĕсене хĕле лайăх хатĕрлесе çитерер

Совет государстви çынсене чир-чĕртен сыватакан тата профилактика учрежденийĕсене тытса тăма, вĕсен çурчĕсене юсаттарма, вĕсем валли çĕнĕ çуртсем лартма укçа-тенкĕ нумай парать. Пирĕн çĕршывра сывлăха сыхлас ĕç валли паракан укçа-тенкĕ хисепĕ çултан-çул ӳссе пырать. Кăçал медицина учрежденийĕсен çурчĕсене тĕпрен юсама кăна 100 миллион тенке яхăн укçа уйăрса панă. Çав укçа-тенкĕпе больницăсене, поликлиникăсене, диспансерсене, фельдшерпа акушер пункчĕсене, ача çуратмалли çуртсене, ача ясли çурчĕсене юсамалла. Вĕсене юсамалли заданисене вăхăтра тата кирлĕ пек пурнăçласа пымалла. Çапла майпа медицина учрежденийĕсене хĕллехи вăхăтра ĕçлемешкĕн лайăх хатĕрлесе çитермелле.

Медицина учрежденийĕсене хĕле хатĕрлес тĕлĕшпе тĕрлĕ ĕçсем тумалла. Вĕсен çурчĕсене, вĕсене хутса ăшăтмалли системăсене, кăмакасене, водопроводсене, канализацине, кухньăсене, чӳречесене юсамалла. Хĕлле хутма вут-шанкă тата урăх йышши топливо кирлĕ чухлĕ хатĕрлесе хумалла.

Çак ĕçсене республикăри хăшпĕр районсенче лайăх организациленĕ. Район Совечĕн исполкомĕсем, хула, ял, поселок Совечĕсем тата сывлăх пайĕсем халăха медицина пулăшăвĕ парас ĕçе лайăхлатма тăрăшнă çĕрте больницăсене тата сывлăха сыхлас ĕçĕн ытти учрежденийĕсене юсавлă тытса усрама тăрăшаççĕ.

Кăçал Улатăрта туберкулез чирне хирĕç кĕрешекен диспансерăн çурчĕсене тĕпрен юсанă, вĕсене юсамалли плана 116,6 процент пурнăçланă. Ку çуртсене юсаттарма хула Совет исполкомĕн сывлăх пайĕ тата диспансерăн главнăй врачĕ Лебедев юлташ хытă тăрăшнă. Вĕсем çуртсене юсаттарма çулталăк пуçлансанах тытăннă. Çавна пула юсав ĕçĕсене кĕске срокрах туса пĕтерме май килнĕ. Фельдшерпа акушер шкулĕн çуртне юсама панă пĕтĕм укçа-тенкĕпе усă курнă. Шкул директорĕ Бураков юлташ юсав ĕçĕсене лайăх организациленĕ, ĕçĕн пахалăхне пĕрмаях тĕрĕслесе тăнă. Улатăрти ача ясли çуртне те хĕле лайăх хатĕрлесе çитернĕ.

Буславкка районĕнчи Сала больницине вăхăтра юсаса пĕтернĕ. Муркаш районĕнчи больницăн главнăй врачĕ Исаева юлташ та больница çурчĕсене юсаттарас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет.

Красноармейски районĕнчи сывлăх пайĕн заведующийĕ Алексеев юлташ медицина учрежденийĕсен çурчĕсене юсаттарас, вĕсене хĕле хатĕрлес ĕçсене оперативлă ертсе пырать. Çавна пула ку районта больницăсене, фельдшерпа акушер пункчĕсене юсаттарнă, вĕсем валли вут-шанкă хатĕрлес ĕç ăнăçлă пулса пырать.

Анчах медицина учрежденийĕсене хĕле хатĕрлес ĕçре çитменлĕхсем нумай-ха. Çуртсене тĕпрен юсамалли плана республикăра тăхăр уйăх хушшинче пĕтĕмпе те 68 процент çеç пурнăçланă. Чылай больницăсене тата ытти учрежденисен çурчĕсене хĕле хатĕрлес ĕç вăраха кайнă. Çуртсене юсаттармалли плана Элĕк, Йĕпреç, Советски, Пăрачкав районĕсенче уйрăмах начар пурнăçласа пыраççĕ.

Ĕç çакăн пек япăх тăни мĕнрен килет-ха?

Хăшпĕр медицина учрежденийĕсемпе сывлăх пайĕсен руководителĕсем кăçал тĕпрен юсамалли çуртсене вăхăтра юсаттарма, вут-шанкă хатĕрлеме сахал тăрăшаççĕ. Медицинăн уйрăм учрежденийĕсен руководителĕсем больницăсен çурчĕсене юсама кирлĕ йывăçа хатĕрлесе турттарса пама колхоз правленийĕсемпе договорсем тăваççĕ те, çавна тунипех лăпланса лараççĕ, договорсем мĕнле пурнăçланнине тĕрĕслесе тăмаççĕ, ĕçе хăвăртлатма тăрăшмаççĕ. Шупашкарти республика больницин главнăй врачĕ Сидаев юлташ больница çурчĕсене юсаттарас пирки строительство организацийĕсемпе договорсем тунипех лăпланать. Пур ĕçсене те вĕсем туса парасса шанать. Çавăн пек ĕçленипе пула, икĕ çул хушшинче те больницăн Свердлов урамĕнчи пурăнмалли çуртне юсаса пĕтереймен.

Райсоветсен исполкомĕсем медицина учрежденийĕсен çурчĕсене юсаттарасси çинчен решенисем сахал мар йышăнаççĕ, анчах çав решенисене пурнăçлас ĕçре медицина учрежденийĕсене конкретлă пулăшса пымаççĕ. Хăшпĕр райсовет исполкомĕсен финанс пайĕсем сывлăх учрежденийĕсен çурчĕсене юсама вăхăтра укçа памаççĕ.

Çуртсене юсама строительство материалĕсем, çав шутра кирпĕч, известь, йывăç чылай кирлĕ. Анчах çав материалсене вăхăтра памаççĕ. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ хушнă тăрăх, Вăрмар, Тăвай, Калинино районĕсен больницисене юсама Йĕпреç вăрманпромхозĕнчен 270 кубометр йывăç кӳрсе килмелле. Çак йывăçа хатĕрлесе парас ĕçе Вырăнти тата топливо промышленность министерстви ертсе пыма тивĕçлĕ. Анчах çав йывăçран кăçалхи сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕр кубометр та паман. Шупашкарти вăрманпромхозăн сывлăх учрежденийĕсен çурчĕсене юсама 90 кубометр хăмă памалла, вăл паянхи куна 36 кубометр çеç панă.

Медицина учрежденийĕсене хĕле хатĕрлес ĕçри çитменлĕхсене халех пĕтермелле. Çуртсене юсас ĕçе хăвăртлатмалла. Кăçал республикăри сывлăх учрежденийĕсен çурчĕсене юсама бюджетран виçĕ миллион тенкĕ уйăрса пама йышăннă пулсан, çав укçа-тенкĕпе туллин усă курмалла, плана палăртнă ĕçсене пурне те туса пĕтермелле.

Çуртсене юсама панă укçапа мĕнле ĕçсем тунине, çав ĕçсене мĕнле тунине тĕрĕслесе тăрасси, строительство материалĕсем тупма пулăшасси—вырăнти Советсен исполкомĕсемпе вĕсен сывлăх пайĕсен руководителĕсен тивĕçĕ. Медицина учрежденийĕсен çурчĕсене юсаттарнипе пĕрлех, вĕсем валли хĕл касиччен хутмалăх вут-шанкă тата ытти йышши топливо хатĕрлесе хума тăрăшмалла. Асăннă ĕçсем ăнăçлă пулса пырасси сывлăх учрежденийĕсен руководителĕсем хăйсем тăрăшса ĕçленинчен нумай килет. Çавăнпа та вĕсен ĕçри ответлăхне ӳстерес пулать.

Халиччен опытран çакă курăнать: ăçта строительство материалĕсене хĕлле хатĕрлесе хураççĕ, çуртсене юсама çуркунне çанталăк ăшăтсанах тытăнаççĕ, унта юсав ĕçĕсене кĕркуннеччен туса пĕтереççĕ. Çакна шута илсе, сывлăх учрежденийĕсен руководителĕсен çуртсене юсама кирлĕ материалсене тата вут-шанкăна хĕллехи вăхăтрах çителĕклĕ хатĕрлемелле.

Больницăсене, ача çуратмалли çуртсене, ача яслисен тата ытти учрежденисен çурчĕсене юсани, вĕсене хĕле хатĕрлени халăха медицина пулăшăвĕ парас ĕçе лайăхлатма тăрăшнине пĕлтерет. Çавăнпа та ку ĕçсене вăхăтра туса пĕтерессишĕн çине тăрса ĕçлес пулать.

Н. СЕРГЕЕВ,
Чăваш АССР Сывлăх министерствин главнăй инженерĕ.

Стена хаçачĕ студентсен пĕлĕвне ӳстерес ĕçре

Аслă шкулсенче тухса тăракан стена хаçачĕсен тĕп задачи—студентсен пĕлĕвне яланах ӳстерсе пырасси. Чăваш Педагогика институтĕнче тухса тăракан «Педвузовец» ятлă стена хаçачĕ çак пархатарлă задачăна чыслăн пурнăçласа пырать. Хăйĕн страницисенче вăл вĕренӳре малта пыракансен опычĕпе паллаштаракан, япăх вĕренекенсене питлекен, вĕсене вĕренӳре малта пыракансем пек тăрăшса вĕренме чĕнекен заметкăсем тăтăшах пичетлет.

1952—53 вĕренӳ çулĕнче пичетленнĕ «Вĕренӳ отличникĕн опычĕнчен» ятлă заметкăра хаçат физикăпа математика факультетĕнчи 3-мĕш курсра вĕренекен П. Комаров опычĕпе паллаштарать. «П. Комаров юлташ—вĕренӳ отличникĕ. Вăл яланах планпа ĕçлет, çавăнпа та вăл пĕр минут та сая ямасть. Кашни практикăлла занятиех вăл икĕ-виçĕ кун малтан хатĕрленет, хăйĕн кашни ответĕнчех Комаров материала çирĕп те тĕрĕс пĕлнине кăтартса парать. Анчах та Комаров юлташ лайăх вĕренсе пынипе лăпланса лармасть, çав вăхăтрах общественăлла ĕçсене те туса пырать. Вăл группăра комсорг пулса ĕçлет, художественăлла пултарулăх ĕçне те тăтăшах хутшăнать». Малалла хаçат П. Комаровăн ĕç планĕпе паллаштарать, унтан ытти студентсем мĕнле вĕренсе пыни çинчен çырать. «Р. Якимовăран тĕслĕх илĕр» ятлă заметкăра çапла каланă: «Р. Якимова тăватă çул хушши ĕнтĕ «отлично» паллăпа çеç вĕренсе пырать. Вăл кашни практикăлла занятиех тĕплĕ хатĕрленсе килет. Планпа ĕçлени Р. Якимовăна пысăк пулăшу парать. Физикăпа математика факультетĕнче вĕренме ытти факультетсенче вĕреннисенчен чылай йывăр, теççĕ. Анчах та, тăрăшса вĕренсен, ку факультетра та «отлично» паллăсемпе вĕренсе пыма пулать». Малалла çак заметкăра Р. Якимова хăйĕн юлташĕсене мĕнле пулăшса пыни çинчен çырса кăтартнă.

Стена хаçатĕнче час-часах вĕренӳре кая юлса пынă студентсем мĕнле майпа çитĕнӳсем тума пуçлани çинчен калакан заметкăсем пичетленеççĕ. «Вĕренӳ çулĕн малтанхи уйăхĕсенче вĕренӳ тĕлĕшĕнчен пирĕн группа факультетра чи кайра пыракан группăсен шутĕнче тăратчĕ, мĕншĕн тесен студентсем практикăлла занятисене çителĕксĕр хатĕрленсе килетчĕç, комсомолецсен пухăвĕнче вĕсем вĕренӳ çинчен пĕр ыйту та сӳтсе явмастчĕç»,—тесе çырать март уйăхĕнче тухнă номерте литература отделенийĕн II-мĕш курсĕнче вĕренекен Молькова студентка. — Каярахран студентсем хăйсем тĕрĕс мар тунине ăнланса илчĕç: вĕсем пĕр-пĕрне пулăшма пуçларĕç, группăра тусăх нумай çирĕпленчĕ. Практикăлла тата семинар занятийĕсене çителĕксĕр хатĕрленсе килекен студентсем çинчен халĕ яланах пухусенче сӳтсе яватпăр. Группăри староста, комсорг тата профорг студентсем мĕнле вĕренни çине çителĕклĕ пăхма пуçларĕç. Группа тăрăшса вĕренме пуçларĕ, тесе çырать Молькова юлташ.

Стена хаçачĕ студентсем практикăна мĕнле ирттерни çинчен те çутатса парать, час-часах студент-практикантсен заметкисене пичетлет. «Чи лайăх професси» ятлă заметкăра чĕлхепе литература отделенийĕнче III-мĕш курсра вĕренекен Г. Шерланмова студентка çапла çырать: «...Практикăра эпĕ учитель ĕçĕ мĕн тери йывăр та кăткăс иккенне ăнланса илтĕм. Вăл мана эпĕ профессие тĕрĕс суйласа илнине кăтартса пачĕ. Эпĕ шкула, ачасене чĕререн юратса пăрахрăм, мĕнпур вăйăма тарăн шухăшлă урoксем парассишĕн хутăм. Кашни урока тĕплĕ те çителĕклĕ хатĕрлентĕм, хамăн йăнăшсене хура вĕренсе пытăм. Анчах та лайăх учитель пулас тесен, урoксене лайăх парса пыни çеç çителĕксĕр. Çав вăхăтрах класс тулашĕнчи ĕçсене те тăрăшса туса пымалла. Ку енĕпе эпĕ пысăк çитĕнӳсем турăм: вĕренӳре юлса пыракансемпе 13 заняти, час-часах тата вулакансен конференцине ирттертĕм». Малалла Шерланмова занятисене, вулакансен конференцийĕсене мĕнле ирттерни çинчен çырса кăтартать. «Пирĕн пĕрремĕш практика çинчен» ятлă заметкăра физикăпа математика факультетĕнче III-мĕш курсра вĕренекен Н. Кириллов студент хăйсен курсĕнчи М. Александров, Н. Михайлова, З. Пакушкина студентсен практикăри опычĕсемпе паллаштарать.

«Педвузовец» хаçатра студентсен йăнăшĕсене, вĕренӳри çитменлĕхсене палăртакан заметкăсемпе статьясем тăтăшах пичетленеççĕ. Çак заметкăсемпе статьясем япăх вĕренсе пыракансене, дисциплинăна пăсакансене, занятисене йĕркеллĕ çӳремен студентсене тĕрĕс çул çине тăратас ĕçре пысăк вырăн йышăнаççĕ.

Стена хаçачĕ институт пурнăçне пур енчен те çутатса пама тăрăшать. Хаçатра институтри комсомол, профсоюз организацийĕсем, парти организацийĕ, вĕренӳ пайĕ мĕнле ĕçлени лайăх палăрса тăрать. Хаçат редколлегине институтри пуçламăш парторганизаци пĕрмай пулăшса тăрать.

Халĕ çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пырать. «Педвузовец» хаçат, малашне тата лайăхрах ĕçлесе, студентсен вĕренӳ пахалăхне лайăхлатма пулăшĕ.

А. ГОРШКОВ.

Ялхуçалăх продукчĕсем сутаççĕ

КАЛИНИНО. Районти колхозсемпе колхозниксем, государство умĕнчи парăмсене парса татнă хыççăн, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем нумай сутаççĕ. Çак ĕçе ăнăçлăн туса пыма районта пахча çимĕçсемпе выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем сутăн илмелли виçшер пункт организациленĕ. Юлашки кунсенче 17 колхоз ялхуçалăх продукчĕсем сутма договорсем тунă. Чылай колхозсем ялхуçалăх тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем сутса автомашинăсем, строительство материалĕсем туянаççĕ. «Гвардеец», «Трактор» колхозсем сĕт сутса, Маленков ячĕпе, Чапаев ячĕпе тăракан колхозсем çĕрулми парса автомашинăсем илеççĕ. Свердлов ячĕпе, Каганович ячĕпе тăракан, «Новый путь» колхозсем выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем сутса строительство материалĕсем туянчĕç.

Колхозниксем те выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем сутса промышленность таварĕсем туянаççĕ. Юлашки кунсенче колхозниксене çĕвĕ çĕлемелли машинăсем вуннă тата строительство материалĕсем нумай сутнă.

Чапаев ячĕпе тăракан колхоз членĕ Илларионов, Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ С. Филиппов юлташсем аш-какай сутса çĕвĕ çĕлемелли машинăсем, «Правда» колхозри колхозница Т. Сретенская юлташ пӳрт çине витмелли шифер туянчĕç.

Ялхуçалăх продукчĕсем сутма хатĕрлев пунктне куллен çĕршер колхозник пырать. Колхоз руководителĕсем колхозниксене автомашинăсем, лавсем парса пулăшаççĕ.

Хатĕрлев кантурĕ выльăх-чĕрлĕх çăвĕ, çăмарта тата ытти продуктсем хатĕрлемелли çулталăкри плана тултарчĕ.

Н. ВАСИЛЬЕВ.

Совет спорчĕн çыннисем

Çĕршыв чемпионĕ

Ялти учитель Ардальон Игнатьев Шупашкарти стадионра пĕрремĕш хут чупнă хыççăнах спорт енĕпе палăрчĕ. Ун чухне республикăри çăмăл атлетсен ăмăртăвне Канашран килнĕ типшĕмрех студент спорт енĕпе пĕрремĕш ӳсĕм тăвасса никам та шанман.

Республикăри паллă çăмăл атлетсен ăмăртăвне пĕрремĕш хут хутшăнни Ардальона савăнăç кӳнĕ. 100 метра 11,3 секундра чупса тухса, вăл Чăваш республикин чемпионĕ ятне илнĕ. Стадионра çĕнĕ чемпионăн хушаматне радио тăрăх пĕлтерсен, Ардальон Игнатьев патне республикăри паллă спортсменсенчен пĕри пынă. Вăл Ардальона 400 метр чупма сĕннĕ.

— Ку дистанцие эсĕ çĕр метртан та аванрах чупса тухма пултаратăн пек туйăнать,—тенĕ вăл. Çамрăк спортсмен килĕшнĕ.

Дистанцие вăл чи малта пынă. Игнатьев, 400 метра 54,6 секундра чупса тухса, республикăра çĕнĕ рекорд тунă. Çавăнтан вара Игнатьев яланах 400 метра чупма тытăннă.

Çулталăк иртсен, Россия Федерацийĕнче мала тухассишĕн Иваново хулинче иртнĕ ăмăртăва хутшăннă. Кунта вăл Чăваш республикин рекордне 2,2 секунд чухлĕ лайăхлатнă. Çав çулах Игнатьев 400 метра чупас тĕлĕшпе хăйĕн малтанхи результачĕсене икĕ хутчен лайăхлатнă. Ялти спортсменсем хушшинче мала тухассишĕн Нальчикра ирттернĕ ăмăртура çак дистанцие 51,3 секундра чупса тухса пĕрремĕш вырăн йышăннă. Тепĕр уйăхран вăл Одессăра ялти спортсменсем хушшинчи ăмăртура 400 метра 50.6 секундра чупса тухса СССР, чемпионĕн ятне илнĕ.

Çулталăк иртсен, Игнатьев Совет Союзĕн чемпионĕпе Ленинград çыннипе, спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕпе Юрий Литуевпа тĕл пулнă. Çакă вăл Киев хулинчи Н. С. Хрущев ячĕпе тăракан стадионра пулнă. Чăваш ялĕнчи физкультура коллективĕн членĕпе çĕршывăн ăста спортсменĕн пĕрле чупма тӳр килнĕ. Ялти спортсмен хăйне лăпкă та çирĕп тытма пултарайман, питĕ хумханнă. Тренерсем кашни чупакан хусканăвне, кăмăлне сăнаса тăнă. Пистолет перĕ сасса илтсен, Игнатьевăн пĕтĕм ӳт-пĕвĕ сăрăлтатса кайнă.

Ардальон хăйпе юнашар никама та курман, вăл малалла ыткăннă. Ăна хăй хăвăрт чупать пек туйăннă, анчах ытти чухнехи пек чупма çăмăлах пулман. Игнатьевпа юнашар Литуев чупса пынă. Юлашки çул çине тухсан, Ардальонăн вăйĕ чакнă, вăл вăраххăнрах чупнă, çакна спортсмен хăй те асăрханă. Литуев малтанхи пекех çăмăллăн та хăвăрт чупнă, Игнатьевран иртсе кайнă. Ленинград спортсменĕ финиша çăмăллăн çитнĕ.

Çавăнтан вара А. Игнатьев Зайцев ертсе пынипе тренировкăсем тума пуçланă. Вăл хăйĕн йăнăшĕсене шута илнĕ, вĕсене пĕтерме тăрăшнă. Кашни утăма, кашни хусканăва техника енчен тĕрĕс тума тăрăшнă. 1952 çулхи çуллахи спорт сезонĕ пуçланас умĕн А. Игнатьев хăйне Хельсинкире пулса иртекен Тĕнчери спорт ăмăртăвĕсене хутшăнакан СССР командин составне кĕртни çинчен пĕлнĕ. Вăл вĕçĕмсĕр савăннă. Хельсинкире Тăван çĕршыв чысĕшĕн кĕрешме тивĕçлĕ пулни спортсмена çĕнĕ хăват панă. Темиçе кунтанах Киев хулинче Игнатьев 400 метра Ю. Литуев кăтартнă вăхăт хушшинче чупса тухать. Тепĕр уйăхран, Хельсинкие тухса каяс умĕн, Выборгри стадионра Ленинград çыннине Ю. Литуева çĕнтерет. Вăл çак дистанцие 48,2 секундра чупса тухать. Ку вăл Пĕтĕм Союзри рекорд. Кунтах Р. Трапандзе, Э. Пилагс тата Ю. Литуев спортсменсемпе пĕрле вĕсем 4×400 метрлă эстафетăна чупас енĕпе СССР рекордне çĕнетеççĕ.

Пĕтĕм тĕнчери спорт ăмăртăвĕсене хутшăнни А. Игнатьев пурнăçĕнче паллă событи пулнă. Кунта вăл Тăван çĕршыв мухтавĕшĕн çине тăрса кĕрешме тăрăшнă. Чĕрĕк финалта 400 метра чупакан спортсменсенчен вăл виççĕмĕш чупса тухса, Пĕтĕм Союзри çĕнĕ рекорд тунă. Унăн результачĕ—48,1 секунд. Тепĕр кунне А.Игнатьев тата тепĕр ӳсĕм тунă. Çурма финалта 400 метра 47,4 секундра чупса тухнă. Хельсинкири ăмăртусенче Игнатьев Ямайкăри негрсене кăна выляса янă. Спортсмен вĕсем çав тери хăвăрт чупнинчен тĕлĕннĕ. Вăл çакна ăнланнă: хăвăрт чупас тесен, утăмсене мăнаçлăрах туса чупни, мышцăсене лăпкăнрах, ытлашши хытармасăр тытни кирлĕ.

Çăмăл атлетика енĕпе мала тухассишĕн ирттернĕ ăмăртура ялти спортсмен СССР чемпионĕн хĕрлĕ хăюне илнĕ, 200 метра чупас тĕлĕшпе ирттернĕ финалти чупура В. Сухарев хыççăн иккĕмĕш вырăна тухса, кĕмĕл медаль илме тивĕçлĕ пулнă. Ардальон Игнатьев Хельсинкири ăмăртусенче тата СССР-ти çăмăл атлетсен ăмăртăвĕнче хăй кăтартнă результатсене çапах та ăнăçсăр тесе шутланă. Чи пултаруллă та ăста чупакансемпе тĕл пулни ăна нумай вĕрентнĕ.

Кăçал çуллахи вăхăтра малтанлăха ирттернĕ ăмăртусен результачĕсем çакна кăтартса пачĕç: Игнатьев спорт енĕпе, уйрăмах чупас тĕлĕшпе, çĕнĕ çитĕнӳсем тума чылай шанăç парать. Мускаври шкул ачисен спорт уявĕнче вăл, 100 метра 10,8 секундра чупса тухса, пĕрремĕш вырăна тухнă. Ку вăл—Чăваш республикин çĕнĕ рекорчĕ.

Çăмăл атлетика енĕпе Россия Федерацийĕнче мала тухассишĕн ирттернĕ ăмăртусенче А. Игнатьев спортăн виçĕ тĕрлĕ вăййи енĕпе РСФСР чемпионĕн хĕрлĕ хăюне илнĕ.

Пирĕн земляк спорт енĕпе тĕнчери 48 çĕршывсен спортсменĕсем хушшинче Бухарестра пулса иртнĕ ăмăртусенче те пысăк ăнăçу тунă. Çак ăмăртусене пĕтĕм тĕнчери çамрăксемпе студентсен IV-мĕш фестивалĕ ячĕпе ирттернĕ пулнă. Çур финалта 400 метра чупса, вăл мала тухнă. Унăн результачĕ—47,2 секунд. Ку—ССР Союзĕн çĕнĕ рекорчĕ. Тепĕр кунне Игнатьев çак дистанцие тата хăвăртрах — 46,8 секундра чупса тухнă. Кăçал çакăн пек результат кăтартни тĕнчере тăваттăмĕш, Европăра иккĕмĕш хут пулнă. Спорт ăмăртăвĕн участникĕсем совет атлетне питĕ хĕрӳллĕ саламланă.

Тепĕр сехетрен пултаруллă спортсмен 200 метра чупма хутшăннă. Кунта та вăл малта пулнă. Унăн результачĕ—21,1 секунд. Çакă вăл пирĕн çĕршывăн çĕнĕ рекорчĕ шутланать. Çак дистанцие Европăра никам та унтан хăвăртрах чупса тухайман.

Августăн шăрăх кунĕнче Бухарестри стадионра инçетри Чăваш республикин çамрăкĕ Тăван çĕршыв мухтавĕшĕн тунă çитĕнӳсем ячĕпе Совет Союзĕн ялавĕ икĕ хутчен сывлăшра вĕлкĕшнĕ. Стадионра Совет Союзĕн Гимнĕ кĕвви янранă.

Флагшток çинче вĕлкĕшсе тăракан хĕрлĕ хăмач çине Ардальон Игнатьев нумайччен пăхса тăнă. Çак асран каймин самантра вăл ниçанхинчен савăнăçлă пулнă.

А. Игнатьев спорт енĕпе тунă çитĕнӳсене пысăк хак панă. Вăл СССР-ти спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕн хисеплĕ ятне илме тивĕçлĕ пулнă.

Темиçе кун иртсен, А. Игнатьев Пĕтĕм Союзри çăмăл атлетсен ăмăртăвне хутшăннă. Вăл каллех Совет Союзĕн чемпионĕн икĕ хăюне илнĕ. Курма пынисене пултаруллă спортсменăн ӳсĕмĕ савăнтарнă. Спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ В. Казанцев, пĕтĕм тĕнчери спортсменсем хушшинче ирттернĕ нумай ăмăртусене курнăскер, хăйĕн дневникĕ çине çапла çырса хунă:

«Ардальон Игнатьев çав тери хитре те çăмăллăн чупнине пăхсан, хĕпĕртемесĕр тăма çук. Игнатьев чупас техникăна аван пĕлет. Çавăн пекех спорт енĕпе вăл питĕ лайăх хатĕрленнĕ. Пĕр сехет хушшинче вăл икĕ хутчен чупрĕ. Малтан 200 метра, ун хыççăн 400 метра. Икĕ хутĕнче те чи лайăх тĕслĕхсем кăтартса, мала тухрĕ».

А. Игнатьев спорт енĕпе тунă ӳсĕмсене Совет Союзĕнче тата урăх çĕршывсенче тухса тăракан хаçатсенче пысăк хак панă.

Нумаях пулмасть, Игнатьев Будапешт хулинче пулчĕ. Унта Совет Союзĕнчи тата Венгрири спортсменсен юлташла ăмăртăвĕсем пулса иртрĕç. Вăл кунта та пысăк çитĕнӳ тунă. 400 тата 200 метрсене питĕ хăвăрт чупса тухса, пĕрремĕш вырăнсене йышăннă. Октябрĕн пуçламăшĕнче Ардальон Игнатьев çĕршыври чи паллă çăмăл атлетсемпе пĕрле Осло хулинче Норвеги спортсменĕсемпе ирттернĕ юлташла тĕлпулусенче пулчĕ. Çак тĕлпулусене Швецири тата Данири чи лайăх чупакан спортсменсем те хутшăннă.

Норвегире тухса тăракан хаçатсем Совет Союзĕнчи çăмăл атлетсен ӳсĕмĕсем çинчен статьясем пичетленĕ. «Дагбладет» хаçат çапла çырать: юлашки вăхăтра сезон вĕçленнĕ пирки Ослора çăмăл атлетикăпа сахал интересленнĕ пулнă. Анчах пĕтĕм тĕнчипе палăрнă спортсменсем Игнатьев, Щербаков, Кривоносов, Куц, Казанцев, Литуев, Григалка, Кузнецов тата вĕсен юлташĕсем килни хула стадионне нумай халăх пухĕ», тенĕ. Çăмăл атлетика вăййисен пур енĕпе те совет спортсменĕсемпе кĕрешме пултаракан кунта тупăнман.

Норвеги стадионĕн чупмалли çулĕ çине тухсан, Игнатьев Совет Союзĕн представителĕсем Тăван çĕршыв чысне мĕнле хӳтĕленине аса илнĕ. Çакă ăна çĕнĕ вăй панă. Совет çĕршывĕн пултаруллă спортсменĕ 200 тата 400 метрсене питĕ хăвăрт та хитре чупса тухнă. Норвегире тухса тăракан хаçатсенче «вырăссем çăмăл атлетика енĕпе питĕ пысăк ӳсĕмсем турĕç» тенĕ. Малалла хаçатсенче пирĕн çĕршыври спортсменсен лайăх енĕсем çинчен, уйрăмах Игнатьев ӳсĕмĕсем çинчен, çырнă.

Ардальон Игнатьев çакна лайăх пĕлет: унăн результачĕсене хăй вĕреннĕ шкулти физкультура коллективĕ çеç мар, республикăри мĕнпур физкультурниксем тимлĕн сăнаса тăраççĕ. Мускаври, Ленинградри, Хельсинкири, Бухарестри, Будапештри тата Ослори стадионсенче тунă ӳсĕмсем Чăваш республикинчи спортсменсене чун-чĕререн савăнтараççĕ. Ялти çăмăл атлетăн çитĕнĕвĕсем çакăн çинчен калаççĕ: пирĕн Тăван çĕршывра кашни физкультурник хăйĕн ăсталăхне пултарулăхне ӳстерсе пырсан, спорт енĕпе пысăк ӳсĕмсем тума май пур.

В. СТАНЮКОВ.

Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕ

ВЕНА, октябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Конгресăн каçхи ларăвĕнче Ален ле Леап председатель пулса ертсе пынă.

Алжирти рабочисен представителĕ Андре Рюиз Алжирти рабочи класс Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн программине ĕçĕсене пĕтĕмпех ырласа йышăнни çинчен каланă.

Рюиз тăпăмăнсем рабочисен юхăмне вăйсăрлатма пăхнине хирĕç ĕçсыннисем паттăррăн кĕрешни çинчен каласа панă. Халĕ, тенĕ вăл, рабочисем çакна ытларах та ытларах ăнланса çитрĕç: рабочи класăн пурнăçĕ начарланни, профсоюзсен ирĕклĕхĕсене тата демократиллĕ ирĕклĕхсене пĕтерсе пыни, наци ирĕклĕхĕшĕн пыракан юхăма хутшăннă çынсене хирĕç юнлă ĕçсем туса иртерни, ытти ĕçсенчен кинмеĕр пусне, раскольниксен сутăнчăкла ĕçĕсенчен те килет. Рабочисем хăйсем ирĕке тухассишĕн пыракан кĕрешӳре тĕнчери пĕрлĕхĕн пысăк пĕлтерĕшне ăнланаççĕ. Тĕнчери çак пĕрлĕхе Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕ кăларса тăратнă задачăсене пурнăçлассишĕн кĕрешекен мĕнпур ĕçсыннисем тăрăшнипе туса хума пулать.

Голландири ĕçсыннисен представителĕ Брандсен «Маршалл планне» пурнăçлани Голландие мĕн патне çитерсе тăратни çинчен каланă. «Маршалл планĕ» пире çакна кăтартса пачĕ, тенĕ Брандсен, «экономикăлла пулăшу» пирĕн çĕршыва вăйлăн хĕçпăшалланмалли политикăпа тата вăйлăрах тăллантарать. Хĕçпăшалланнипе тухакан расходсем пĕтĕмпех ĕçсыннисен çурăмĕсем çине тиенеççĕ.

Брандсен хыççăн совет профсоюзĕсен делегацийĕн руководителĕ Н. М. Шверник юлташ сăмах илнĕ. Ăна конгресс делегачĕсем нумайччен алă çупса йышăннă.

ВЕНА, октябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер конгресăн каçхи ларăвĕнче Совет профсоюзĕн делегацийĕн руководителĕ Н. М. Шверник сăмах каланă хыççăн, Израильри ĕçсыннисен конфедерацине кĕрекен рабочи парти пĕрлешĕвĕн фракцийĕн представителĕ Барцилай сăмах илнĕ. Барцилай хăйĕн сăмахĕнче Израильри рабочисем пĕрлĕхшĕн кĕрешни çинчен каласа панă.

Ун хыççăн Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн генеральнăй секретарĕ Жан Лаффит тухса каланă. Вăл конгресс делегачĕсене — пĕтĕм тĕнчери рабочи юхăмĕн представителĕсене, миршĕн кĕрешекенсен малти ретĕнче пыракан çынсене саламланă.

Жан Лаффит хăйĕн сăмахĕнче миршĕн пыракан тĕнчери юхăма халăхăн чи анлă сийĕсем, политика тĕлĕшĕнчен тĕрлĕ шухăшлă çынсем хутшăннине палăртнă. Рабочи класс, тенĕ вăл, çĕнĕ вăрçă çулне пӳлсе хума пултаракан вăй пулса тăрать.

«Тĕнчери ирĕклĕ профсоюзсен федерацине» кĕрекен Норвегири строительство промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисен профсоюзĕн представителĕ Кристиансен çапла каланă: Норвеги Атлантика блокне кĕни Норвеги халăхне экономика енĕпе тӳсме çук пысăк йывăрлăх кӳчĕ, пурăнма кирлĕ япаласен хакне ӳстерсе ячĕ, социальнăй обеспечени валли тухакан расходсене чакарчĕ, демократиллĕ правасемпе ирĕклĕхе пусса хучĕ.

ВЕНА, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕн паян ирхине пулса иртнĕ ларăвĕнче чи малтан Кубăри ĕçсыннисен представителĕ Хосе Мигель Эспино тухса каланă. Кубăри рабочи класс хăйĕн экономикăлла интересĕсене хӳтĕленипе кăна çырăнса тăмасть, тенĕ вăл. Кубăри рабочисем паттăр Корея халăхне хирĕç çапăçма пĕр çын та яртармарĕç.

Тĕнчери пролетариат пĕр шухăшлă пулнипе тата çĕршыври рабочисем паттăррăн кĕрешнипе, тенĕ малалла Эспино, Кубăри рабочисен юратнă руководительне, Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн вице-председательне Ласаро Пеньяна тĕрмерен кăларнă. Çакă вăл апир пурте пĕрле тунă çĕнтерӳ пулать. Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕпе Латинла Америкăри ĕçсыннисен конфедерацийĕ пĕр шухăшлă пулни Кубăри пролетариата çакна кăтартса пачĕ: вăл пĕчĕк утрав çинче пурăнать пулсан та пĕччен мар.

Конгресс делегачĕсене Гватемала делегацийĕн членĕсем — портсенче ĕçлекен рабочисен представителĕ Георгио Коронадо, пир-авăрпа çĕвĕ промышленноçĕнчи рабочисен федерацийĕн представителĕ Альбино Гарсия, ялхуçалăх рабочийĕсен представителĕ Габриэль Камей саламланă.

Кун хыççăн конгресс ячĕпе США-ри тир-сăран промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисен профсоюзĕн председателĕ Бен Голд, çак профсоюзăн секретарĕ Пьетро Люччи янă саламсене вуласа панă. Вĕсене Америка влаçĕсем конгресс ĕçне хутшăнма Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен тухса кайма ирĕк паман.

Трибуна умне Китайри паттăр рабочи класăн представителĕ Лю Нин-и тухать. Вăл Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕ рабочи класăн пĕрлĕхĕ ытларах та ытларах вăйланса пынă вăхăтра, миршĕн пĕтĕм тĕнчипе пыракан юхăм никçанхинчен те ытла вăйланса çитнĕ вăхăтра пулса иртни çинчен калать.

Çĕнĕ Китайри профсоюзсем, тет Лю Нин-и, текех ĕнтĕ пусмăрта тăракан класс организацийĕ пулса тăмаççĕ. Вĕсем государствăна ертсе, тытса пыракан класăн массăллă организацийĕсем пулса тăраççĕ. Китайри профсоюзсен пысăкран та пысăк задачи вăл мĕнпур рабочисене, техникăлла интеллигенципе служащисене производствăна аталантарассишĕн ăнлануллăн та активлăн кĕрешме пĕрлештерсе ертсе пырасси пулать.

Лю Нин-и çĕнĕ Китайри рабочисем вĕренме, хăйсен квалификацине ӳстерме пысăк майсем илни çинчен калать.

Лю Нин-и çĕнĕ Китая тăвас ĕçре профсоюзсем пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртать.

Унтан Пĕтĕм Францири ĕçлев конфедерацийĕн секретарĕ тата Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн вице-председателĕ Ален ле Леап сăмах калать. Ăна делегатсем тăвăллăн алă çупса йышăнаççĕ. Ален ле Леап Вьетнамри ĕçлев конфедерацийĕн делегацине саламлать. Франци халăхĕн чи анлă сийĕсем, тет вăл, вăрçа чарса лартассишĕн тата Демократиллĕ Вьетнам Республикин президенчĕпе Хо Ши Минпа калаçусем иртерессишĕн активлă кĕрешеççĕ.

Ален ле Леап рабочи класăн пĕрлĕхĕ çинчен тăракан ыйту пирки тĕплĕн чарăнса тăрать.

Конгресра Венесуэлăри ĕçсыннисен ячĕпе нефть промышленноçĕнчи рабочисен профсоюзĕн представителĕ Федерико Рондон сăмах калать.

Венесуэлăра Англипе Америка капиталĕ пуç пулса тăнине палăртса, Рондон çапла каланă: ют çĕршыв империалисчĕсем пуç пулса тăнине хирĕç кĕрешесси, чи малтан, забастовкăсем вăйланнинче палăрса тăрать. Рабочисем çакна туйса çитрĕç: çĕршыври реакципе ют çĕршыв империализмне хирĕç кĕрешмелли тĕп хĕçпăшал вăл ĕçсынни массисен пĕрлĕхĕ пулса тăрать.

Рондон конгресс делегачĕсене çакна асра тытма чĕнсе каланă: Венесуэлăри нефть промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисен руководителĕсенчен пĕри Хесус Фариа виçĕ çул ытла ĕнтĕ тĕрмере ларать. Ăна вилĕм хăратса тăрать. Рондон конгресс делегачĕсене Фариана ирĕке кăларассишĕн пĕтĕм вăйа хурса кĕрешме чĕнет.

Делегатсем Польшăри профсоюзсен центральнăй совечĕн председателĕ Виктор Клосевич тухса каланине ăшшăн йышăнса илеççĕ. Вăл конгреса Польшăри ĕçсыннисен ячĕпе саламлать.

Клосевич Польша халăхĕ социализм строительствинче тунă çитĕнӳсем çинчен каласа парать.

Польшăри профсоюзсен представителĕ тухса каланă хыççăн, конгреса Вена хулинчи çамрăк рабочисен делегацийĕ саламланă.

Сирири рабочисен конгресĕн делегачĕ Фадель Сирири ĕçсыннисен йывăр пурнăçĕ çинчен каласа панă. Кунта ĕç кунĕ 10—12 сехет тăршшĕ пырать. Рабочисене канмалли куншăн тӳлемеççĕ. Çулталăкра пĕр хутчен паракан отпуска ĕçсыннисен 2 проценчĕ кăна усă курать. Сирири рабочисем ку таранччен социальнăй страхованипе усă курмаççĕ. Вĕсем хваттер тĕлĕшĕнчен уйрăмах начар условисенче пурăнаççĕ.

Сирири рабочисем çакна ăнланаççĕ, тенĕ Фадель, пĕтĕм тĕнчери миршĕн кĕрешесси рабочисем хăйсен пурнăç условийĕсене лайăхлатассишĕн кĕрешессипе тачă çыхăнса тăрать.

Çакăнпа ирхи лару хупăннă.

ВЕНА, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Паян каçхи ларура конгресăн сĕнӳсем тĕлĕшпе ĕçлекен комиссийĕн председателĕ Дюамель конгресс ячĕпе вĕçĕмсĕр саламлă телеграммăсем, посланисем, çырусем килсе тăни çинчен пĕлтернĕ. Ку таранччен 40 çĕршывран саламлă телеграммăсем илнĕ. Çакă вăл Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕн ĕçĕсемпе мĕнпур çĕршывсенчи ĕçсыннисем питех те интересленни çинчен калать.

Саламлă çырусене вуласа панă хыççăн конгресра Болгарири профсоюзсен центральнăй совечĕн председателĕ Тодор Прахов, Корейăри профсоюзсен федерацийĕн делегаци пуçлăхĕ Се Хи На, Румынири ĕçсыннисен представителĕ Морару, Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери демократиллĕ федерацийĕн представительници Мари-Клод Вайян-Бутюрье, Аргентина делегацийĕн руководителĕ Рубенс Искаро, Трансваалĕн (Кăнтăр Африка) вырăнти халăхсен профсоюзĕсен делегачĕ Поль Джозеф, Израиль профсоюзĕсен представительници Э. Виленска тухса каланă.

Чехословакире Германи ыйтăвне мирлĕн татса парас тĕлĕшпе съезд иртterнĕ

ПРАГА, октябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Прагăра Германи ыйтăвне мирлĕн татса парас тĕлĕшпе съезд уçăлнă.

Съездра Чехословаки премьер-министрĕ В. Широкий доклад тунă.

Германи ыйтăвне мирлĕн татса парасси çинчен тăракан ыйту Чехословаки халăхĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйту пулнине палăртса, Широкий çапла каланă: Чехословаки халăхĕ Совет Союзĕ Германи ыйтăвне мирлĕ майпа татса памалла тăвас тĕлĕшпе туса иртterекен мĕнпур ĕçсене тăтăклăн ырласа йышăнать.

США-н агрессиллĕ вăйĕсемпе Хĕвеланăç Германири милитаристла ушкăнсем пĕрлешни, тенĕ Широкий, тĕнчери лару-тăрăва йывăрлатакан, пĕтĕм тĕнчери мире, халăхсен ирĕкĕпе никама пăхăнманлăхне хăратса тăракан тĕп хăрушлăх пулса тăрать.

Эпир çакна ĕненетпĕр, тенĕ малалла Широкий, эпир нимĕç халăхĕпе мирлĕ тата туслă пурăнма тăрăшнине нимĕç халăхĕн ытларахăш пайĕ ăнланать тата ырлать.

Съезда Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ ячĕпе Изабелла Блюм саламланă.

Пренире нумай делегатсем тухса каланă. Вĕсем Чехословакири ĕçсыннисен ячĕпе çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне хирĕç, пĕрлĕхлĕ, демократиллĕ, мирлĕ Германишĕн кĕрешме хатĕр тăни çинчен каланă.

Съезд пĕрлĕхлĕ, демократиллĕ, мирлĕ, никама пăхăнман Германишĕн кĕрешессине вăйлатма чĕнсе решени йышăннă.

Юлашкинчен съездра миршĕн тăракансен Чехословаки комитечĕн председателĕ Анжела Голинова-Спурна тухса каланă.

Итали общественноçĕ Китай Халăх Республикине йышăнма ыйтать

РИМ, октябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Миршĕн тăракансен юхăмĕн Итали комитечĕ пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: пĕтĕм Италире митингсемпе пухусем пулса иртеççĕ. Унта тухса калакансем Китай Халăх Республикине йышăнма ыйтаççĕ. Митингсемпе пухусене халăхăн чи анлă сийĕсем, вăл шутра хуçасемпе сутуçăсем те, хутшăнаççĕ. Вĕсем Китайпа суту-илӳ тăвассине вăйлатма ыйтаççĕ.

Юлашки кунсенче çакăн пек пухусем Турин, Виченца, Верона, Ровиго, Милан, Флоренци, Перуджа хулисенче пулса иртнĕ.

БУХАРЕСТРИ ÇАР ТРИБУНАЛĔ АМЕРИКА ШПИОНĔСЕМПЕ ДИВЕРСАНЧĔСЕМ ПИРКИ ЙЫШĂННĂ ПРИГОВОР

БУХАРЕСТ, октябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Бухарестри çар трибуналĕ Америка шпионĕсемпе диверсанчĕсене сут туса пĕтерчĕ. Сут çакна палăртнă: айăпланакан А. Тенасе, М. Попович, И. Голя, И. Самояла, Г. Поп, И. Толан шпионсем Америка разведки шпионла, террорла ĕçсем, диверсисем тăвас тĕллевпе Румыни Халăх Республикин территорине янă. Трибунал çакă асăннă шпионсене вĕрсе вĕлермелле, пурлăхĕсене конфискацилемелле тунă.

Çавăн пекех шпионсене пытарса пурăннă тата вĕсене сăтăрла ĕçсем тума пулăшса тăнă Э. Тартлера, М. Влада, И. Будана, Г. Динкене, А. Кордана, И. Юхаса тата И. Космана персе вĕлермелле тата пурлăхĕсене туртса илмелле тунă.

Айăпланакан Е. Стетина 25 çуллăха, А. Поповича 20 çуллăха хупса лартмалла тунă. Айăпланакан Т. Бобне 3 çуллăха хупса лартмалла тата пурлăхĕсене конфискацилемелле тунă.

Вьетнамри вăрçă

ПЕКИН, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви Вьетнамри информаци агентствинчен илнĕ хыпарсем тăрăх Вьетнам партизанĕсем çĕршывăн кăнтăр пайĕнче сентябрь уйăхĕнче тунă çитĕнӳсем çинчен пĕлтерет. Ту-Бьен провинцийĕнче Вьетнам партизанĕсем сентябрĕн 12-мĕшĕнче тăшманăн 250 салтакне пĕтернĕ тата хĕçпăшалсемпе боеприпассем нумай туртса илнĕ. Сентябрĕн 3-мĕшĕнчен пуçласа 13-мĕшне çитиччен вĕсем Тай-Нинь тата Ми-То провинцийĕсенче (Сайгонран çурçĕр-хĕвеланăç тата кăнтăр-хĕвелтухăç енче) тĕреклетнĕ 5 вырăна çĕмĕрсе тăкнă.

Лонгхо юханшывĕ çинче (Сайгонран кăнтăр-хĕвеланăç енчи Винь-Лонг провинцийĕ) Вьетнам халăх çарĕн чаçĕсем сентябрĕн 13-мĕшĕнче тăшманăн çар пăрахучĕсене 7 путарнă тата сиенленĕ. Çав кунсенех халăх çарĕн чаçĕсем тăшманăн десант антаракан пысăк пăрахутне путарнă.

Британи Гвианинчи ĕçсем пирки

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС) Ассошиэйтед Пресс агентстви корреспонденчĕ Джорджтаунран пĕлтернĕ тăрăх, Британи Гвиании премьер-министрĕ Джаган, Англи влаçĕсем вырăнтан кăларнăскер, хаçатсенче пичетлесе кăларма панă заявленире Англи влаçĕсене айăплать. Вĕсем, тет вăл, «хăйсем пирĕн ахаль те пулсе хунă конституцие пĕтерсе лартма хăтланнине пытарса тăрас шутпа «коммунистла кавар» шухăшласа кăларчĕç».

Корреспондент çырнă тăрăх, Гвианăра пăлхавсем тухасси чухăнлăх вăйланса çитнинчен, тавар хакĕсем ытла та хăвăрт ӳсе пынинчен, ĕçсĕрлĕх массăллă пулса тăнинчен, пурнăç шайĕ ытла та начар пулнинчен тата халăх выçă пурăннинчен килнĕ. Ĕçсĕрлĕхе пула, ахаль те пĕчĕк ĕç укçи тата ытларах чакать.

Демократиллĕ Германи Республикине хуçалăх тĕлĕшĕнчен аталанса пыма, Совет правительстви пулăшать. Германири чылай предприятисем репараци тӳлевĕ шучĕпе СССР аллине күçнă. Çавăн пек 33 предприятие Совет правительстви 1954 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче тӳлевсĕрех Демократиллĕ Германи Республики аллине парать. Вăл шутра машинăсем тăвакан, хими, металлурги тата ытти предприятисем те пур. 33 предприятин пĕтĕм хакĕ 2 миллиард та 700 миллион марка шутланать.

Совет правительстви предприятисене тӳлевсĕрех каялла пани çинчен пĕлтернине Демократиллĕ Германи Республикинчи халăх савăнса кĕтсе илнĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Лейпцигри транспорт оборудованийĕ тăвакан заводăн çĕнĕ цехĕсем. Ку завода Демократиллĕ Германи Республикин аллине параççĕ. Малтанхи вăхăтра заводра 1.500 рабочи ĕçленĕ, çĕнĕ цехсем уçăлнипе 6.800 рабочи ĕçлет.

ЦЕНТРАЛЬБИЛЬД фотоӳкерчĕкĕ.

Неру Бомбей хулинче пулса иртнĕ пресс-конференцире каласа пани

ПЕКИН, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви Бомбейран илнĕ хыпар тăрăх çапла пĕлтерет:

Инди премьер-министрĕ Неру октябрĕн 10-мĕшĕнче Бомбей хулинче пулса иртнĕ пресс-конференцире çапла каланă: «Кунта эпир перемири çинчен тунă килĕшӳ условийĕсене юри пĕтерсе лартма хăтланнине куратпăр пулмалла». Вăл тыткăнри çар çыннисен лагерĕсенче тыткăнри çар çыннисене хирĕç пусмăрла ĕçсем тăвакан тата вĕсене хăйсен тăван çĕршывне таврăнма чăрмантарса тăракан хăшпĕр «ушкăнсене» сивленĕ. Тыткăнри çар çыннисенчен нумайăшĕ, тенĕ Неру, нейтральнăй государствăсен представителĕсенчен уйăрса тунă репатриаци тĕлĕшпе ĕçлекен комиссирен хăйсене çак ушкăнсенчен хӳтĕлеме ыйтнă. Тыткăнри çар çыннисем хăйсен шухăшĕ çинчен комиссие пĕлтерес пулсан, çав ушкăнсем вĕсене вĕлерессипе хăратнă.

Неру çавăн пекех тыткăнри çар çыннисем нейтральнăй государствăсен представителĕсенчен уйăрса тунă репатриаци тĕлĕшпе ĕçлекен комиссипе сыхăну тытма чăрмантарма хăтланни перемири çинчен тунă килĕшĕве тата Женева конвенцине хирĕç пынине палăртнă. «Комисси тыткăнри çар çыннисемпе калаçасшăн пулнă, анчах ăна тыткăнри çар çыннисемпе калаçма ирĕк паман», — тенĕ Неру.

Кăнтăр Корея правительстви, тенĕ Неру, комиссие хăйĕн ĕçне тума 90 кун хушши чăрмантаоса тăрасшăн пулмалла. Ун хыççăн вĕсем: комисси ĕçлемелли срок иртрĕ, урăх нимĕн тума та çук, тесе каласшăн пулмалла. Инди çарĕсем Корейăна пырса çитиччен çак тактикăпа усă курнă. Унччен, перемири çинчен тунă килĕшӳ условийĕсене пăсса, Кăнтăр Корея влаçĕсем тыткăнри 20 пин ытла çар çыннине ирĕке кăларнă. Тыткăнри çар çыннисене пурне те çакăн пек тарса тухма пулăшас пулсан е вĕсене ирĕке кăларас пулсан, вара тыткăнри çар çыннисем нимĕн тума та пултарас çук, пĕтĕм ĕç çакăнпа пĕтсе ларма пултарать.

«Кăнтăр Корея правительстви перемири çинчен тунă килĕшĕве пĕтерсе лартма хăтланни, — тенĕ Неру, — ООН командованийĕ шантарса каланисене хирĕç пырать. Çавăнпа та эпĕ ăнлантару ĕçĕсем туса иртерме çуртсем туса лартассине тăсса пынă пирки иккĕленме пусларăм. Ăнлантару ĕçĕсем иртерме палăртнă 90 кунтан 41 кунĕ çуртсем тума иртет пулсан тата ăнлантару ĕçĕсем иртермелли срока малалла тăсас мар пулсан, вара çав ĕçсене тума пурĕ те 49 кун кăна юлать. Çав вăхăтрах ку ĕçе 90 кун хушшинче те туса иртерме йывăр пулĕ.

Малалла Неру çапла каланă: «Ăнланмалла мар ыйтусем тата йĕркесĕрлĕхсем ытла та нумай пулнă пирки ООН командованийĕн тата ун хыçĕнче тăракан çĕршывсен репатриаци тĕлĕшпе ĕçлекен нейтральнăй комиссие Инди хурал çарĕсем пирки хăйсен шухăшĕ çинчен татăклăн каласа пĕлтерес пулать. Кăнтăр Корея правительстви малашне те хальхи пекех хăратма пăрахмасть пулсан тата политикăлла конференцие пухмаççĕ пулсан, эпир каллех перемири пуличчени йĕрке патне пырса тухма пултаратпăр».

Черчилль Маргетра тухса калани

МАРГЕТ, октябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Консерваторсен партийĕн Маргет хулинче пулса иртнĕ конференцийĕнче ĕнер премьер-министр Черчилль сăмах тухса каланă. Вăл çĕршыври тата тулашри политикăн хăшпĕр ыйтăвĕсем çинче чарăнса тăнă.

Черчилль хĕвеланăç «оборонине» тĕреклетме чĕннĕ. Кун пирки вăл çапла каланă: «Кирек мĕнле пулсан та эпир Европа çарне туса хума пулăшас тĕлĕшпе мĕн тума пултарнине пурне те тума... хатĕрленетпĕр. Ку çара нимĕçсен пысăк контингенчĕ кĕмелле пулать.

Эпир, американецсем пекех, французсен вăйĕсене пирĕн çĕнĕ тусăн — нимĕçсен вăйĕсемпе шайлаштарса пымалла тăвас шутпа, хамăрăн хĕçпăшаллă вăйсене Европăра тытса тăрăпăр. Французсем Европăри оборона пĕрлешĕвне туса хума килĕшмесен, Германи вăйĕсене Çурçĕр Атлантика блокĕн никĕсĕ çинче хĕвеланăçри союзниксен вăйĕ çумне пĕрлештерес тĕлĕшпе мĕнле те пулсан çĕнĕ май суйласа илессинчен пусне пирĕн урăх нимĕнле май та юлмасть».

Хĕвеланăçпа Хĕвелтухăç хушшинчи сыхăну ыйтăвĕсем çинче чарăнса тăрса, Черчилль: «эпĕ халиччен пекех тĕрлĕ çĕршывсен ертсе пыракан деятелĕсен... мĕнпур йывăрлăхсене пĕтерес шутпа... тĕл пулма май тупмалла, тесе шутлатăп», тенĕ.

Л. Н. ТОЛСТОЙĂН «ЖИВОЙ ТРУП» ПЬЕСИ ТРОНХЕЙМ ТЕАТРĔНЧЕ

ОСЛО, октябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). «Афтенпостен» хаçат çапла пĕлтерет: Л. Н. Толстой çуралнăранпа 125 çул тултарнă май Тронхейм хулинчи театрта Толстойăн «Живой труп» пьесине лартса панă. Куракансем спектакле пысăк хак панă.

Швеци хаçачĕсем совет спортсменĕсем çинчен

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Швецире тухса тăракан хаçатсем, Совет Союзĕн çăмăл атлечĕсем Мальмĕре, Эребрура тата Упсалара хăйсен вăййисене кăтартни çинчен отчетсем пичетленипе пĕрлех, лайăх спортсменсен портречĕсене пичетлесе кăларнă, совет атлечĕсен пысăк ăсталăхне палăртнă. «Вырăс спортсменĕсем, — тесе çырать. «Стокгольмс тиднинген» хаçат, — Мальмĕре пулнă ăмăртура чаплă çитĕнӳсем кăтартрĕç».

Совет спортсменĕсем ĕнер Эребрура тата Упсалара ăмăртнине те хаçатсем пысăк хак параççĕ. «Кĕтнĕ пекех, — тесе çырать Швецири телеграф бюровĕн спорт енĕпе ĕçлекен корреспонденчĕ, — Упсалара пулса иртнĕ çăмăл атлетсен ăмăртăвĕнче совет спортсменĕсем çĕнтерчĕç».

«Стокгольмс тиднинген» хаçатăн спорт енĕпе ĕçлекен корреспонденчĕ: вырăссем Эребрура пур вăйĕсем тĕлĕшпе те тенĕ пекех малта тăнине кăтартрĕç, тесе çырать.

«Дагенс нюхетер» хаçат корреспонденчĕ çакна палăртать: Упсалара совет спортсменĕсем хăйсемпе ăмăртакансене пурне те — шведсене те, финсене те — кая тăратса хăварчĕç.

Спорт енĕпе ĕçлекен корреспондентсем пурте йĕтре ывăтас тĕлĕшпе тĕнче рекордсменки Зыбина ăсталăхĕ çинчен çыраççĕ, Куц, Кривоносов, Литуев, Казанцев, Кузнецов тата ытти спортсменсем те пысăк çитĕнӳ тунине палăртаççĕ.

Тĕнчери шахмат турнирĕнче

ЦЮРИХ, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Тĕнчере шахмат вăййипе мала тухассишĕн пыракан турнирта 23-мĕш вăйă хыççăн совет гроссмейстерĕ Смыслов малта пырать. Вăл 21 парти выляни хыççăн 13,5 очко илнĕ. Решевский иккĕмĕш вырăнта тăрать. Вăл 22 парти вылянă хыççăн 13,5 очко илнĕ. Бронштейнпа Керес 22-шер парти вылянă хыççăн 13-шер очко илнĕ.

Хутар шкулĕнчи çамрăк краеведсен походĕ

Пирĕн шкулти краеведени кружокĕн членĕсем юлашки икĕ çул хушшинче Сăр шывне тата ун таврашĕнчи вăрмансемпе улăхсене тата сăрт-тулă вырăнсене тĕпчесе пĕлес тĕлĕшпе ĕçлерĕç. Эпир Сăр шывĕ тăрăх икĕ хутчен походра пултăмăр. Малтанхи поход 1952 çулта пулчĕ. 8—10-мĕш классенче вĕренекенсем Çĕмĕрле—Пăрачкав—Улатăр маршрутпа çĕр километр ытла çуран кайрĕç.

Кăçал та, иртнĕ çулхи пекех, эпир Çĕмĕрле—Княжпха — Кăрмăш — Етĕрне — Васильсурск маршрутпа походра пултăмăр. Çак походра краеведени кружокĕн членĕсем 10 çын, икĕ учитель тата Чăвашсен краеведени музейĕн сотрудникĕ пулчĕç. Пирĕн ушкăн Сăр шывĕ тăрăх Çĕмĕрлерен пуçласа Васильсурск хулине çитиччен 150 километра 20 кун хушшинче çитрĕ. Походра пулнисен тĕллевĕ Сăр шывĕпе унăн çыранĕсене тĕпчесе вĕренесси, Сăр сывăхĕнче вырнаçнă колхозсен хуçалăхĕпе паллашасси пулчĕ. Кунсăр пуçне эпир гидрологи енĕпе тĕпчев ĕçĕсем туса иртерме тĕллев лартрăмăр.

Çак походра вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпах хатĕрлеме тытăнтăмăр. Ку ыйтăва темиçе хутчен те пухусенче сӳтсе яврăмăр. Кружок членĕсем пулас поход çинчен шкулта уйăхра пĕрре тухса тăракан «Тăван çутçантăлăк» бюллетеньре тăтăшах çырса тăчĕç. Учительсемпе кружок членĕсем Сăр шывĕ çинчен докладсемпе лекцисем нумай иртерчĕ.

Кружокра иртерекен занятисенче Сăр çинчен тата çак юханшыв çинче вырнаçнă хуласен историйĕ çинчен докладсем нумай тунă.

Çула тухиччен поход участникĕсенчен икĕ звено турăмăр. Кашни звенона уйрăм руководитель ертсе пычĕ. Тĕплĕн хатĕрленнĕ хыççăн пирĕн ушкăн июнĕн 1-мĕшĕнче Сăр çине тухрĕ.

Çапла вара Хутарти вăтам шкулта вĕренекен çамрăк краеведсем икĕ походра пулса 300 километр ытла çуран çӳрерĕç, тĕрлĕ йышши пуян материал пухрĕç. Вĕсем хăйсен сывлăхне чылай çирĕплетрĕç, сăнавсем нумай туса иртерчĕç. Походра тупнă тĕрлĕ йышши япаласем шкул кабинечĕсем валли питĕ паха экспонатсем пулаççĕ. Походсем ачасен тавракурăмне чылай ӳстерме тата Тăван çĕршыв пуянлăхĕсене лайăх тĕпчесе вĕренме пулăшрĕç.

В. ТОЛСТОВ-АТНАРСКИЙ.

Çĕмĕрле районĕ,
Хутарти И. Н. Ульянов
ячĕпе тăракан вăтам шкул.

Çĕрпӳ хулинче

◆ **Шкулсемпе техникумсенче.** Кунта педагогика училищи, ялхуçалăх тата библиотека техникумĕсем, профтехшкул, вăтам, сиччĕ çул вĕренмелли тата базовăй шкулсем пур. Вĕсенче вĕренекенсен хисепĕ çулсерен ӳсет. Халĕ хулари техникумсемпе шкулсенче икĕ пин çын ытла вĕренет. Иртнĕ çуркунне 250 çынна яхăн вĕренсе тухнă: вĕсен шутĕнче агрономсемпе механиксем 58 çын, тĕрĕ тĕрлекенсемпе атă-пушмак мастерĕсем—56, культурăпа сутăç работникĕсем 45 çын.

◆ **Кĕнекесен хисепĕ ӳсет.** Хулара библиотекăсен хисепĕ вуннăран та иртет. Вĕсем кашни çул çĕнĕ кĕнекесемпе пуянланса пыраççĕ. Культура çуртĕнчи библиотекăпа ачасен библиотеки валли кăçал çĕнĕрен 1.400 кĕнеке ытла туяннă. Халĕ ку библиотекăсенче 17 пин кĕнеке яхăн. Профтехшкулти библиотека валли те çак кунсенче 2.000 тенкĕлĕх çĕнĕ кĕнекесем туяннă.

◆ **Радио кĕртеççĕ.** Хулари пур çуртсене те радиофикацилесе çитернĕ. Кăçал çĕнĕрен 142 киле радио кĕртнĕ. Пĕтĕмпе хулара радиоточкăсем 800 ытла. Кунсăр пуçне, вуншар киле радиоприемниксем пур.

◆ **Кашни киле хаçат-журнал.** Ĕçсыннисем хаçат-журнал нумай çырăнса илеççĕ. Хальхи вăхăтра хулана хаçатсем 1.370 экземпляр, журналсем 1.000 экземпляр ытла килсе тăраççĕ.

◆ **439 киносеанс.** Культура çуртĕнче кашни кунах кинокартинăсем кăтартаççĕ. Кăçалхи 9 уйăх хушшинче унта 439 киносеанс пулнă, вĕсене 33.600 çынна яхăн пăхнă.

◆ **Ача амăшĕсемшĕн тăрăшни.** Государство нумай ача амăшĕсене пысăк пулăшу парать. Хулара ачасен яслипе сачĕ уçнă. Кунсăр пуçне, 186 хĕрарăма кăçалхи 8 уйăхра 73.400 тенкĕ ытла пособи панă.

◆ **Çĕнĕ çуртсем лартаççĕ.** Хулара общественăлла çуртсемпе коммунальнăй хваттерсем тунипе пĕрлех, уйрăм çынсем çурт лартаççĕ. Кăçал государство уйрăм çынсене çурт тума 259 пин тенкĕ кивçен панă.

Х. ЛИСИН.

К Ĕ С К Е Н

★ **Çĕнĕ çуртсем.** Ишлей районĕнчи Жданов ячĕпе тăракан колхоз общественăлла вылăх-чĕрлĕх валли 300 тонна силос хывса хăварчĕ. Сысласене, ĕрама çĕнĕ пысăк вите турĕ, саман кирпĕчрен чăхсене вите тунă.

И. ХМЕЛЕВ.

Редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — октябрĕн 17-мĕшĕнче, сезон пуçланнă кун — «Элтăн». Октябрĕн 18-мĕшĕнче — «Семья чысĕ».

Спектакльсем каçхине 7 сехет те 30 минутра пуçланаççĕ. Касса кăнтăрла иртсен 4 сехетре уçăлать.

Билетсем малтанах илсе хума пулать.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-07, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—18-37, парти пурнăç пайĕ—3-98, обзорсен пайĕ—6-64, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 09379

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР.

Заказ № 2283. Тираж 20.000 экз.